КС(Чув)
Ю96
Ч-36386

Сергей Юшков

# пурнăç тӳпинчен



Кӳкеç 1998 г.

Национальная библиотека ЧР
4-036386

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

Сергей ЮШКОВ

# ПУРНĂÇ ТӐПИНЧЕН

Сăвăсемпе поэмăсем,
юмахсемпе юптарусем

Кӳкеç — 1998 ç.

УДК 894.344
ББК 84 Чув. 7—5
Ю-96

ПРОВЕРЕНО
06 СЕН 2017

Ч-36386

Республики

© Изд-во «Чувашия», 1998 г.

15 В№ 5—8676—099—5

# ХАМ ÇИНЧЕН КĔСКЕН ÇЫРНИ

Эпĕ илемлĕ Сăр тăрăхĕнчи Атăлкасси (Етĕрне районĕ) ялĕнче 1918 çулхи юпа уйăхĕнче çуралнă. Çĕршывра граждан вăрçи пынă. Атте шуррисемпе çапăçма кайнă.

Шкул çулне çитсен, 1926 çулта авăн уйăхĕнче Палтай ялне Бойков Петр, Яргутов Северьян, Ямутов Яков хамăн лайăх юлташсемпе вĕренме çӳренĕ, вĕренӳре пĕр-пĕрне пулăшнă.

Пире нумай çул ĕçленĕ Мардарейкин Федор Михайлович учитель вĕрентетчĕ.

Федор Михайлович пире сăвă-калав тĕрĕс сасăпа ăнланса вулама, илемлĕ çырма вĕрентетчĕ.

Аслăрах классенче вĕреннĕ чух хамăр та сăвă-калав çырма хăнăхса пытăмăр.

5-мĕш класра вĕреннĕ чух çуркунне хам та çутçанталăк чĕрĕлнипе савăнса сăвă çырса пăхрăм, ăна класра тухакан хаçатра пичетлерĕç. Çакă мана тата малалла та çырас кăмăла çĕклерĕ. Эпĕ ирĕклĕ вăхăтсенче хамăр пахчана тухса сăвă хайлаттăм. Малтанхи сăвăсене Етĕрне районĕнче тухакан «Колхозник юлташĕ» хаçатра пичетлерĕç.

Анчах литература пĕлĕвĕ сахаллине туйса, эпĕ Шупашкарти педагогика институтĕнчи филологи факультетне вĕренме кĕтĕм. Икĕ çул вĕреннĕ хыççăн мана 5—7 класра вĕрентекен учитель ятне парса Штанаш шкулне (Хĕрлĕ Чутай районне) ăсатрĕç.

1937—1938 çулсенче халăх тăшманĕсене пур çĕрте те шыранă. Çав çулсенче Штанаш шкулĕнчи нумай учительсене хупса хунă иккен.

Сталин пуçарнă репресси тапхăрĕ алхасатчĕ. 8—10 классенче вĕрентекен учитель çуккипе мана вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме сĕнчĕç. Эпĕ килĕшрĕм.

Икĕ çул хушши Штанашри вăтам шкулта çанна тавăрса вырăс чĕлхипе литературине вĕрентсе пурăнтăм, чăваш ли-

тератури кружокне ертсе пытăм. Пирĕн кружока ачасем йышлă çӳретчĕç. Çамрăк çыравçăсен сăвви-калавĕсене кружокра тĕплĕ тишкерсе тухаттăмăр, автора хăйĕн ĕçне мĕнле тӳрлетмеллине те кăтартса параттăмăр. Кружока çӳренин усси пуррине курса, çыракан ачасем кружок занятине хавaслансах пыратчĕç.

8—9 классенче вĕреннĕ чух Александр Артемьев (кайран чăвашсен халăх писателĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Кружок ĕçне тимлĕ хутшăнчĕ). Кружока çӳрекенсенчен Алексей Новиков, Михаил Романов, Илья Кудряшов лайăх сăвăсем, калавсем çыратчĕç, анчах вĕсен шăпи йывăр пулчĕ, 1941 çулта Гитлер çарĕ Тăван çĕршыва тапăнса кĕчĕ те, çак çамрăк авторсем те фашистсене хирĕç юнлă вăрçа тухрĕç, паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хучĕç.

Вăрçă умĕн мана та Хĕрлĕ Çара илчĕç, тӳрех мана вĕрентӳ ротине кĕртрĕç. Пĕр çул вĕреннĕ хыççăн вăрçă тухсан, пире кĕçĕн лейтенант тата лейтенант ятне парса вĕрентсе кăларчĕç, чаçе ăсатрĕç.

Пире чылайăшне Ленинград фронтне ячĕç, мана 177 стрелок дивизин 502 пехота полкне пулемет взводăн командирне вырнаçтарчĕç.

Фашистсем тапăнса килнине Колпино хули патĕнче сирсе тăтăмăр (август—ноябрь уйăхĕсенче), Ленинград хули вутлă ункăраччĕ, пире Ленин хулин вутлă ункине татса тухма Погостье станци патне илсе тухрĕç. 1942 çулхи январь уйăхĕнче пирĕн часть Погостье станцине ирĕке кăларассишĕн темиçе хутчен те тăшмана хирĕç атака турĕ, февраль пуçламăшĕнче пĕр хаяр çапăçура манăн пулеметчиксем фашистсене хытă шĕкĕлчерĕç. Эпĕ те пулеметчиксемпе пĕрле Погостье станци патне çывхарса çитрĕм — тăшман сасартăк вут-çулăм кăларма тытăнчĕ. Кунта мана та сасартăк ураран аманцрĕç. Пысăк пуля ман сылтăм ура сыппинчен аяларах пысăк шăмма çĕмĕрсе тухса каять, эпĕ чукмарпа çапнă пек аяккалла сирпĕнсе ӳкетĕп. Тӳрех ӳт-пĕве вут хыпса илнĕ пек çунма тытăнтăм, сивĕ шыв ĕçтереттерет. Йĕри-тавра шап-шурă юр, эпĕ вĕрирен юр чавса илетĕп те çăвара хыпатăп. Юр хыççăн юр çăвара тултаратăп.

Санитарсем мана вăрçă хирĕнчен сĕтĕрсе тухаççĕ, медсанбатра сурана тасатса çыхаççĕ. Кун хыççăн эпĕ тĕрлĕ эвакогоспитальсенче сывалатăп. Юлашкинчен Уралти Березняки хулинче выртатăп. Мана госпитальрен 2-мĕш группăри вăрçă инваличĕ туса киле ăсатаççĕ.

Вăрçă пĕтиччен Шупашкара мана Стихван Шавли поэт Радиокомитета ĕçлеме чĕнсе ярать. Эпĕ Чăвашрадиора 1944 çулхи авăн уйăхĕнче «Ююлашки хыпарсен» редакторĕ пулса ĕçлеме тытăнатăп, 1945 çулхи ака уйăхĕ вĕçлениччен унта ĕçлетĕп.

Унта эпĕ Валентин Урташ поэтпа пĕрле ĕçлерĕм. Стихван Шавли, Чăвашрадиокомитетăн пуçлăхĕ пулнă май, яланах литературăпа хăйĕн сăввисемпе поэмисене кăна ятратчĕ. Эпир Урташ пуш уйăхĕнчи пĕр пухура Стихван Шавлине çавăншăн тухса хирĕç каларăмăр. Шавли пирĕн çине хытă кӳренчĕ. Тепĕр уйăхран штата сахаллатас шутпа пире Урташпа иккĕне те ĕçрен хăтарчĕ. Тĕрĕссипе каласан, штата пĕчĕклетмерĕ, пирĕнтен тасалчĕ кăна. Эпĕ вăрçă инваличĕ май Социаллă пулăшу паракан министр патне кĕтĕм, ун чухне Воронцова Анна Ивановна министрта ĕçлетчĕ. Вăл мана хăйсен министерствине ĕçлеме илчĕ. Пĕр çула яхăн эпĕ çакăнта тăрмашрăм...

Вăрçă пĕтсен эпĕ хам профессипе ĕçлеме пуçларăм. Çутĕç министерстви мана Красноармейскри вăтам шкула вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме ячĕ. Кунта пĕр çул хушши 8—10 классенчи ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентсе пурăнтăм.

Пĕррехинче С. П. Горский профессор мана тĕл пулчĕ те хăй кафедринче чăваш чĕлхипе ĕçлекен ассистент кирлине пĕлтерчĕ. Эпĕ ун сĕнĕвĕпе килĕшрĕм.

1948 çулхи авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕнче Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи чăваш чĕлхин кафедрин членĕ пулса тăтăм. Икĕ çул хушши студентсемпе ĕçлерĕм, хам та вĕренсе пытăм, çамрăксене те чăваш чĕлхине юратма вĕрентрĕм.

Мана кафедра Мускава аспирантурăра вĕренме кайма сĕнчĕ. Эпĕ 3 çул хушши Наци шкулĕсен тĕпчев институтĕнчи Н. К. Дмитриев профессор ертсе пынипе аспирантурăра вĕрентĕм, çĕнĕ тĕпчевсем турăм, «Чăваш глаголне шкулта вĕрентес методикипе» тĕпчев ĕçĕ çыртăм, ăна ăнăçлă хӳтĕлесе, педагогика наукисен кандидачĕ ятне илтĕм. Кун хыççăн каялла Чăваш патшалăх педагогика институтне ĕçлеме таврăнтăм.

1953 çулхи авăн уйăхĕнчен тытăнса 1967 çулхи утă уйăхĕччен чăваш чĕлхипе литература кафедринче студентсене чăваш чĕлхипе вĕрентмелли методикăпа, вырăспа чăваш чĕлхисен танлаштару грамматикин курсĕпе лекцисем вула-

рăм, практика занятийĕсем ирттертĕм. Мана педагогика институчĕн аслă Совечĕ 1960 çулта доцент ятне пама Мускава ВАК-а тăратрĕ. Унта мана доцент ятне пачĕç.

1967 çулта Шупашкарта университет уçрĕç. Пирĕн историпе филологи факультетне (тĕтĕм преподавательсемпе студенчĕсене) педагогика институтĕнчен университета куçарчĕç. Эпĕ унта чăваш чĕлхи кафедринче пенсие кайиччене студентсене вĕрентсе пурăнтăм.

Университетра ĕçленĕ хушăрах литература ĕçне те малалла аталантартăм, вăрçă темипе калавсемпе повеçсем çыртăм. 1971 çулта «Вутлă çулăм» повеçе уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларчĕç.

1975 çулта «Кĕрен кӳлĕсем» повеçпе вăрçă калавĕсем çамрăк вулакансем патне çитрĕç. Шкул ачисене уйрăмах «Кĕрен кӳлĕсем» повесть кăмăла кайрĕ, ăна ырласа хаçатсенче пичетлерĕç, хам та чылай çырусем илтĕм. 1978 çулта вăрçă темипех «Пĕр куç хупмасăр» калавсен кĕнеки çут тĕнче курчĕ. Ку кĕнеке пĕр-икĕ уйăх хушшинче саланса пĕтрĕ.

Совет салтакĕн хăюлăхпа паттăрлăхне, вăл темле йывăрлăхран та çĕнтерсе тухнине «Вутра пиçĕхнисем» повеçре сăнласа пама тăрăшрăм, 1985 çулта пичетленсе тухрĕ.

Вăрçăччен мирлĕ профессипе пурăннă яшсем (хĕрсемпе каччăсем), Гитлер çарĕ пирĕн çине тапăнсан, епле кар! тăрса, алла автомат-пулемет-миномет е тупă тытса сĕмсĕр тăшманпа мĕн виличчен паттăр çапăçнине «Çĕршыв чĕнсен» калавсен кĕнекинче кăтартрăм.

1992 çулта «Çăлăмлă çулсем» сăвăсемпе поэма пичетленсе тухрĕ. «Çулăмлă çулсем» поэмăра икĕ тĕп проблемăна уçса пама тăрăшрăм: вăрçă вăхăтĕнчи халăхсен туслăхĕ çав тери çӳлти вырăнта пулни тата çамрăксен чикĕсĕр паттăрлăхĕ совет халăхне çĕнтерӳ патне илсе çитерни, чаплă çĕнтерӳпе вĕçлени.

1993 çулта «Манăçсăр юрату» вăрçă темипе çырнă калавсен кĕнекине пичетлесе кăларма май килчĕ.

Кун хыççăн уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларасси çав тери йывăрланчĕ. Совет влаçĕ чухне кĕнекесем кăларакан учрежденипе писатель алçырăвне йышăнса юлатчĕ те плана кĕртетчĕ, пĕр-ик çул иртсен, çав алçырăва патшалăх укçипе кĕнеке туса кăларса паратчĕ, кунсăр пуçне авторне кашни пичет листине шута илсе гонорар (ĕç хакне) лайăх тӳлетчĕ, паллă писательсемпе поэтсем — Хусанкай Петĕрĕ, Ухсай Яккăвĕ, Агаков Леоничĕ, Ĕçхĕл Аркадийĕ, Уртем Елексентрĕ — Ар-

темьев Александрĕ тата ыттисем те гонорарпа пурăнатчĕç. Халĕ Ельцин президент вăхăтĕнче писателĕн хăйĕн укçипе, алçырăвне пичетлесе кăларас пулать, хăйĕнех çав кĕнекене сутса укçа тумалла. Капитализм çĕршывĕнче те писатель хăй укçипе кĕнеке кăлармасть, суту илÿ тума та çÿремест. Раççейри хальхи йĕрке писательрен кулни, сумсăрлани пулмасть-ши?

Эпĕ хам 80 çул тултарнă тĕле «Вутлă çил-тăвăл» роман çырса хатĕрлерĕм, анчах ăна пичетлесе кăларасси çав тери йывăр: укçа çук.

Эпĕ Тăван çĕршыва хÿтĕленĕшĕн, ун ирĕкĕпе чысне упрасшăн хастар çапăçнăшăн Совет правительстви мана çакăн пек наградăсем панă: «Отечественнăй вăрçă» орденĕ, «Харсăрлăхшăн» медаль, «Çапăçури хастарлăхшăн» медаль, «Ленинграда хÿтĕленĕшĕн», «Нева плацдармĕшĕн», «Германие çĕнтернĕшĕн», «Карели фронтĕнчи хăюлăхшăн», «Нева Дубравинче палăрнăшăн, Г. К. Жуков çĕр çул тултарнă ячĕллĕ медаль, «I-мĕш Петĕр» 300 çул каялла флот тунă ячĕллĕ, «Нумай çул ырă кăмăлпа ĕçлени» тата тăхăр юбилей медалĕсем.

Литература ĕçĕпе тăрăшнăшăн СССР писательсен Союзĕн членĕ, пĕтĕм тĕнчери писательсен Ассоциаци членĕ, Ал. Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ, «Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ».

Аслăлăхра ĕçленĕшĕн «Педагоги наукисен кандидачĕ»,

Эпĕ чăваш чĕлхине тĕпчесе, ăна çамрăк ăрăва вĕрентессипе çур ĕмĕр ытла ĕçленĕ май 1-мĕшпе 7-мĕш класс таранах шкул учебникĕсем çырнă (6 учебник), чăваш чĕлхине учительсемпе студентсене вĕрентессипе виçĕ вĕрентÿ пособи, вăтăр ытла статьясем, кандидатпа доктор диссертацисем, педагогикăпа методика словарĕ хатĕрленĕ. 1951 ç. Мускавра тухнă «Вырăсла-чăвашла словарь» ĕçне хутшăннă.
доцент, Чăваш халăх ăсчахĕ (академикĕ).

Çырас кăмăлăм иксĕлмен-ха. Романăн 2-мĕш пайĕпе ĕçлеме хама кирлĕ материалсем хатĕрлерĕм.

**Сергей ЮШКОВ.**

1998 çулхи акан 12-мĕшĕ.

# ТАВ САМАХĔ

**Сергей Павлович Юшкова 80 çул тултарнă ятпа пуçа тайса**

Тем тĕрлĕ санăн пултарулăх.
Турри пани, хăв тăрăшни
Санра питех те çураçуллă,
Пулмасть вăл кун пекки кашнин.

Студентсене çуллен ăс патăн.
Çунат хушса, тĕрек илсе
Вĕсем ăсанчĕçĕ хăлатăн
Пулса тăрса педагогсем.

Хайлатăн сăвă, юптару та,
Калав та повесть е роман.
Эс мĕн çырнин тĕшши пит тутă,
Ялан тав тăвĕ вулакан.

Çĕршыв чĕнсен, чĕрӳ чĕнсессĕн,
Асантăн эс инçе çула.
Эс вутлă çумăра лексессĕн,
Кĕрешрĕн улăп паттăрла.

Вутра пиçĕхнисем самайччĕ,
Вĕсем, чăнах, сан пеккисем.
Тăшман кĕлленчĕ те арканчĕ,
Асрах-ха çулăмлă çулсем.

Çут кӳлĕсем те çутă марччĕ—
Кĕренччĕ çавă кӳлĕсем.
Пĕр куç хупмасăр миçе каç-ши
Çунтартăн тăшмана: пĕтсем!..

Кăкру тулли сан йăлкăшаççĕ
Çут медальсем те орденсем.
Сана курсассăн пуç таяççĕ
Пур ватăсем те çамрăксем.

Пурнасчĕ лăпкăн, тарăхусăр.
Çук çав — эс путнă шухăша.
Çыран, ĕçлен тăвасшăн усă,
Юсасшăн лăпкă пурнăça,

Паян та эс постра тăратăн,
Сан канăç çук пĕр авăка.
Çĕр çирĕм çул кун-çул сунатăп
Сана эп — ватă салтака.

Ватта-и — сăмаха илетĕп,
Курнан яшран та яшăрах.
Патваррăн уçăлса çӳретĕн
Хăв пурăнакан çак урамра.

Ун ячĕ: Улмуççи урамĕ.
Сăмах килет чĕлхе çине:
Ку пулĕ — ĕмĕте уçам и —
Юшков урамĕ малашне!

**Гурий Чаржов,**
**Раççей писателĕсен союзĕн членĕ.**

## Поэмăпа юмах-халапсем

# ÇУЛĂМЛĂ ÇУЛСЕМ

## (Поэма)

### 1

Тăван яла эп çулсерен çитетĕп,
Пырса тухатăп унăн варрине.
Ем-ешĕл пĕчĕк пахчана кĕретĕп,
Хуллен пыратăп палăк çывăхне.
Юратнă ялăм та мĕн чул çухатнă
Çыннисене хăрушă вăрçăра,
Илемлĕхе, пуласлăха сыхланă...
Ятсем, ятсем... Пит йышлă ман умра.
Ак «Гизадуллин» тенине вулатăп.
Сабир! Ачалăхри юлташăм ман!
Каллех ак эпĕ сан сăнна куратăп.
Çук, пирĕнтен паян та эс кайман.
Асу сан — тимĕрçĕ. Çемйипелех вăл
Килсе вырнаçнă пирĕн урама.
Ĕçчен, хастар, алли-урийĕ çăмăл.
Вăл мĕн кăна пĕлмест ăсталама!
Ачи те ашшĕнех пуль хывнă унăн:
Çиçеççĕ çивĕч, çĕмĕрт пек куçсем.
Вăл манăн çывăх тантăш-тусăм пулнă,
Пĕрле иртетчĕç çамрăк чух кунсем.
Серте татма пахча хыçне утатпăр.
Мĕн пек хавас серте яшки çиме.
Кĕпçе тухсан та Сабирпах тататпăр,
Йўçек пулсан та, тăрăшсах чăмлатпăр—
Мĕн пухнине паратпăр аннене.
Унтан кĕретпĕр те атте садне —
Ĕçе пуçлатпăр хамăр пĕлнине:
Эп хусăклатăп улмуççи кутне.
Сабир сăрлать китайка вуллине.
— Атьсем!—тет.—Килĕр!—йыхăрать анне.
Йăран туса чечек лартма васкатпăр.
Е курăк шăтнă çĕр улми çине —
Ана час тасатса эпир тухатпăр.
Е шыв çĕклетпĕр çывăх пĕверен
Купăстапа хăяр ани çине.
Хавасланса ун чух ĕçленĕрен —
Пачах туйман эпир ыванннине.

Юлташăм ман хăюллă та хастарччĕ,
Вăл найкăшмастчĕ — йывăрлăх пулсан,
Екки килсессĕн — ырă, вашаватчĕ —
Манпа нихçан та çилленсе вăрçман.
Вăл чăвашла та лайăх калаçатчĕ,
Чăваш тесе те хăшĕсем шутлатчĕç.
Сар кĕркунне çунат сарса килсессĕн,
Атте садне илемлĕ сăн çапсан,
Хур кайăксем кăнтăралла вĕçсессĕн —
Пĕлӳ илме ирех шкула васкан.
Шкула та эпĕ Сабирпа çӳреттĕм
Мăн улăх тăрăх кӳршĕри яла.
Класа эп савăнса кĕреттĕм
Чи лайăх та маттур юлташпала.
Класра та юнашар унпа пулаттăм:
Пĕрлех ларattăм парта хушшине.
Учителе çăвар карса тăнлаттăм:
Мул пулмаллах «пĕлӳ хутаçĕнче».
Пĕр-ик хутчен тетрадь киле юлсассăн,
Е çухатсассăн ручка-кăранташ,
Тӳрех тетрадь сĕнетчĕ ăшă саслăн
Е çырмалли тупатчĕ ман юлташ.
Вырăслипе кăштах вăл такăнатчĕ,
Мана тиветчĕ пулăшма ăна.
Килне пырсассăн амăшĕ ырлатчĕ,
Хисеп тăватчĕç кил-йышпех мана.
Унпа пĕрле колхоз хирне тухаттăм,
Ырми-канми ĕçлеттĕмĕр каçчен.
Çĕрле пулсан, колхоз клубне юхаттăм —
Ташлана ташшине шуçăмченех.
Кăвак хуппи килсен. ĕçе васкана —
Пире тус пек кĕтетчĕ анлă хир.
Ыраш пиçсен, мĕнле çын лăпкă канĕ?
Ирех пырса шаккатчĕ бригадир.
Çурла йăтса ыраш вырма тухатпăр
Атте-анне те йăмăкпа пичче.
Сабирпала пĕр анарах тăратпăр,
Ĕçе пуçлатпăр лăпкă ир çинче.
Сап-сар тырра вăшт çеç касса хуратпăр,
Кĕлте çине кĕлте çыхса пыратпăр.
Пĕрре канмасăр тырă вырнă чух —
Канса тăмашкăн пирĕн вăхăт çук!

Қаҫ тĕксĕмĕ ана ҫине ӳксен,
Хавхаланса утатпăр ял енне.
Сар ҫу ярса хуран пăтти ҫисен,
Қаллех васкатпăр сар хĕрсем патне...
Ҫапла ĕҫре хастарланса ӳсетпĕр,
Чăн хурҫă пек пире пĕҫерчĕ хир.
вăтам шкула та тăрăшса вĕҫлетпĕр,
Ӳссе ҫитсе этем шутне кĕретпĕр —
Мал ĕмĕтпе пурнаттăмăр эпир.
...Ҫав ҫулхине Сабир хĕрпе паллашрĕ,
Пĕр вăйăра унпа часах туслашрĕ.
Хĕрсех ташларĕҫ вут пек ҫамрăксем:
Чĕн пек телейлĕ юратсан этем!
Ун савнă хĕрĕ трахсестра Гюльнар,
Медпунктпала пурнатчĕ юнашар.
Хăва хули пек яштака хĕре
Юратрĕ хучĕ ҫулăмлă чĕре.
Гюльнар! Ҫитет кунта вăл Хусантан,
Чăвашсене сиплес тесе чиртен...
Ҫав трахпункта йĕри-тавра ялтан
Сывмаррисем килетчĕҫ ирсерен.
Сестра сиплетчĕ чирлĕ ҫынсене,
Чăн-чăн телей кӳретчĕ вĕсене.
Ун ыра ячĕ кайрĕ таврана —
Хисеплĕ ячĕ ҫитрĕ района.
Сăнне куран Хисеп хăми ҫинче —
Ҫапла вăл юлчĕ халăх асĕнче.
Гюльнар качча кĕтетчĕ каҫсерен,
Сабир та юрататчĕ чĕререн.
Хĕм пек чечек сапса тăран сирень
Илетчĕ хăйĕн лăпкă хӳттине
Ҫап-ҫамрăк та хитре савнисене.
...Сабир ҫапла юратупа вĕрерĕ,
Хăватлă туйăм хистесе йĕрлерĕ.
Чунтан юратнă ырă чипере.
Качча илме те хатĕрччĕ хĕре —
Пăлчав та турĕҫ, палăртрĕҫ кунне,
Пĕрлешмеллеччĕ сарă кĕркунне.
Ҫук, вăхăт пулчĕ шелсĕр те хаяр:
Европăра ташлатчĕ вут-кăвар.
Хура ҫăхан йĕри-тавра вĕҫетчĕ,
Тем тĕрлĕ тупă анăҫра кĕрлетчĕ.

Фашист туппи тĕлленĕççĕ пире —
Вăл çунтарма та хатĕрççĕ çĕре.
Пире те илчĕç васкаса çара.
Тăван çĕре сыхлатпăр тăшманран.
Карели çĕрĕ сумлă та хитре,
Кĕтсе вăл илчĕ ун чухне пире.
Тутар каччи те пулчĕ юнашар —
Выртса тăма та пурччĕ пирĕн нар.
Стройпа утма вĕрентĕмĕр малтан,
Унтан пеме çӳренĕ пăшалтан.
Хĕрӳ алра ĕçлетчĕ пулемет,
Унтан час-час перетчĕ миномет.
Сабир вĕренчĕ тупăран пеме —
Танксемпеле пĕр шиксĕр кĕрешме.
Вăл вăхăта нихçан сая ямастчĕ:
Пĕлни пит кирлĕ тетчĕ вăрçăра.
Сухарине те çурмалла пайлатчĕ
Инçе кайсассăн — йывăр походра.
Тутар ачи ытла та тараватчĕ:
Çумри йĕпне паратчĕ кирлĕ чух.
Пирус илсен пурне вăл хăналатчĕ —
Калатчĕç пурте: «Мĕн пек ырă чун!?»

2

Канмалли кун. Хĕвел хĕлхем сапать
Çут тӳперен Карели çĕршывне.
Сабир юлташăм васкасах çырать
Гюльнар патне хăй ĕмĕт-шухăшне.
Канма кайма эп атă тасататăп,
Ăна çап-çут ялкăшакан тăватăп.
Кĕпе-тумтир те хӯхĕм те яка —
Тиркев сăмах ан тивтĕр салтака!
...Эпир Ухта кайма тесе тухатпăр,
Сасартăк радио кĕрлет, янрать...
Часах пĕлетпĕр пĕр усал хыпар:
Фашист эшкерĕ килнĕ хурахла —
Йĕри-тавра вăл хыптарать пушар.
«Совет çынни! Тытсам пăшал алла —
Выç кашкăра часах аркатмалла!»
Çав кун эпир те тухрăмăр вăрçа,
Сабирпала каллех пĕрле тăрса,

Тăшмансене тăраттăмăр чарса.
Ютсем килетчĕç хум пек капланса,
Ютсем килетчĕç пĕлĕт пек хăпса.
Йĕри-тавра вут-çулăм çеç кĕрлетчĕ,
Йĕри-тавра сив вилĕм çеç çӳретчĕ.
Чĕрне вĕçнех, тен, юлнăччĕ кун-çулăм —
Ман хамăн та чунра капланчĕ çулăм:
Таптас килет чун иллисене!
Тĕртес килетчĕ вилĕм шăтăкне!
Ун чух çурт-керменсем çунса кĕлленчĕç,
Ун чух туссем те чĕтренсе силленчĕç,
Ун чух ялсем те ялкăшрĕç вутра —
Пĕр хӳтлĕх çукчĕ тăрăсăр çуртра.
Çĕршыв-анне пире ун чух хупларĕ,
Çĕршыв-анне пире ун чух упрарĕ.
Окоп чавса, ун хӳттине тăрса
Çав кун эпир те кĕтĕмĕр вăрçа.
Фрицсем çине переттĕмĕр пĕрмай —
Усал вăйне сиреттĕмĕр самай.
Сабир юлташăм тĕл пеме ăстаччĕ,
Кунсеренех юта сиен тăватчĕ.
Якши! тесе кашни пемессерен
«Шăлатчĕ» фрицсене çут тĕнчерен.

3

Хуллен шăватчĕç вăрçăри кунсем,
Мĕн ĕмĕр юлчĕç асăмрах вĕсем.
...Каллех пуçланчĕ юн пек хĕрлĕ ир,
Каллех вута чĕнет ав анлă хир.
Пăхса тăратăп эпĕ окопран,
Яла сăнатăп эпĕ аякран.
Унта вырнаçнă чи усал тăшман —
Виç хут çапсан та, ун йăви йăшман.
Чунри мĕн пур тарăхупа çунса,
Илесчĕ тетпĕр кашкăра сăхса.
Приказ: «Атака!» Тухрăмăр эпир.
Малта пырать хăюллă командир.
Умра задача — илмелле яла —
Фашистсенчен ăна тасатмалла!
Эпир мала хастарланса чупатпăр.
Эпир мала пере-пере васкатпăр.

Тăшман пемест: чееленет пулас,
Часах хăйне вут-çулăмпа çулас.
Васкатпăр пурте çак яла çитме,
Васкатпăр пурте фрицсене çĕнме.
Қашни — хĕрӳллĕ çулăм пек яшсем —
Илемлĕ, çамрăк вăхăтри çынсем.
Ютсем сасартăк тытăнчĕç пеме,
Хăйсем дзотра, кĕрлет çеç пулемет.
Тантăшăмсем пуçларĕç вĕт ӳкме.
Хыçра-мĕн пулнă пирĕн огнемет,
Черет ярать вăл пулемет çине.
Хайхи шăп пулчĕ — пĕтрĕ-мĕн тинех.
Қаллех тăрса чупатпăр малалла —
Васкатпăр пурте хурăнлă яла.
Вашлаттарать юлташăм юнашар:
Штыкне вăл тăснă, кăнтарса чупать.
Хаярлансассăн чăннипех хастар,
Қăвар пек куçĕпе мала пăхать.
Шăлне çыртса, мĕн пур вăйне пухса
Тăшман çине пырать вăл ыткăнса.
«Урра! Урра!» Ак таврара янрать.
Эпир яла пере-пере кĕретпĕр,
Çав йăх-яха мĕн пур енчен хĕсетпĕр.
Пĕр нимĕçе штыкпа тирет Сабир:
«Эс теприне ан тарт тет, хăвăрт тир!»
Автоматран эп пĕр черет паратăп.
Ик-виç фрицне часах шăлса хуратăп.
Сисмен те эп, мана пĕри малтан
Тĕллет пеме — пĕр çывăхри çуртран.
«Серуш, иптеш!»—Сабир пырса хупларĕ, —
Абай, Серуш!» — тата темскер каларĕ,
Инçех те мар янрарĕ пенĕ сас,
Ак тар шăрши те çапăнчĕ пĕр кас.
Çав туххăмра мĕн пулнине туймарăм.
Сабир кăна: «Ах!» — терĕ те таялчĕ,

4

Йĕри-тавра мăн ял хыпса çунатчĕ.
Хăлат пек сĕмсĕр вилĕмĕн çуначĕ
Пырса хупларĕ манăн тусăма.
Çĕре ӳксен пикенчĕ вăл тăма.
Анчах кун-çулĕ татăлать иккен:

Фашист пульли ҫакланнӑ чӗререн,
Чӗр юн юхатчӗ анлӑ кӑкӑртан,
Автоматне яманччӗ аларан.

Часах тытса эп ҫыхрӑм суранне,
Ик-виҫ хутчен вӑл асӑнчӗ: «Анне!»...
Ун чух хӗвел пытанчӗ тӳпере,
Аш ҫил лӑпланчӗ, сарӑлчӗ тӗтре...
Эп сиплени туса пачах ҫӑлмарӗ,
Юлашкинчен мана хуллен каларӗ:
«Серуш, вилетӗп. Тусӑмҫӑм, ан ман.
Малалла ҫеҫ... Тӗп пултӑрччӗ тӑшман!
Ҫыру ҫырса пӗлтер эс анне... не...
Тата юрат...нӑ ман...ӑн сав...ни...не»

Вӑл йӑшӑлт турӗ, хупӑнчӗҫ. куҫсем
Ах, вилчӗ тусӑм — ҫывӑх, ыр этем!
Ҫапла ҫухатрӑм лайӑх тусӑма,
Ытла та йывӑр ҫамрӑк чунӑма.
Мана упрасшӑн тӑкрӗ хӑй юнне,
Мана упрасшӑн татрӗ кун-ҫулне.
Тути ун темшӗн хӑвӑрт кӑвакарчӗ.
Эп фашиста тӗп турӑм пурпӗрех.
Анчах... юлташӑм ӳкрӗ-ҫке ҫӗре.
Анчах ӳсетчӗ чӑрӑш пек хитре,
Шевле вылятчӗ чечек пек питре.
Вӑл вилчӗ ҫав: ӑна чавса пытартӑм
Ҫӳл ту ҫине, ҫак ялӑн ҫывӑхне.
Сума суса пӗр ҫамрӑк хурӑн лартрӑм
Ялан вӑл чӗррӗн курӑнтӑр тесе.
Ун вил тӑпри ҫине чӗркуҫленсе
Фашистсене чунтан-вартан ылхантӑм:
«Тӑшманшӑн — вилӗм! Тавӑру!..» — тесе
Тус ячӗпе тупа туса каларӑм.
...Виҫ ҫул иртсен тепре кайса эп куртӑм
Юратнӑ тусӑн чыслӑ тӑприне:
Туратланса ешернӗ шурӑ хурӑн
Аса илтерчӗ унӑн кӑтрине.
Ыр ҫын килсе кунта карта та тытнӑ,
Илемлетсе сӑрланӑ хӗрлӗпе.
Тӑван ҫӗршывшӑн паттӑр пуҫне хунӑ —
Ун ячӗ ӗмӗр юлчӗ пирӗнпе.



Ч-36386

Çак хĕрлĕ тес мана аса илтерче
Хам тусăмăн çапăçури юнне.
Сасартăк манăн чунăм кӳтсе килчĕ,
Салхуллăн лартăм ун тăпри çине...

х х х

Тăван яла эп çулсерен çитетĕп,
Пырса тухатăп унăн варрине.
Ем-ешĕл пĕчĕк пахчана кĕретĕп,
Хуллен пыратăп палăк çывăхне.
Юратнă ялăм та мĕн чул çухатнă —
Çыннисене хăрушă вăрçăра.
Ирĕклĕхе, пуласлăха сыхланă.
Ятсем, ятсем... Пит йышлă ман умра!
Юлташ тăпри пит инçетре пулсаӊ та —
Ун ячĕ ялăмрах-ха упранать.
Эп «Гизадуллин» тенине вулатăп,
Чĕре пĕр савăнать, пĕр хурланать.
Эй! вилнисем! Эсир вилмен пĕри те,
Эсир пĕри те манăçа юлман!
Асрах тытать ватти те, çамрăкки те:
Эпир нихçан тăшман кулли пулман.
...Малах васкать-çке вăхăт чарăнмасăр,
Асран тухмаççĕ çулăмлă çулсем.
Аслисене самантлăха манмасăр
Тăван çĕре сыхлаççĕ çамрăксем.

1985 çулхи

мартăн 10-мĕшĕ.

Сергей ЮШКОВ

# ИКĔ ПУЯН

## Юмах

### 1

Евĕкленсе юхать Сар шывĕ —
Ытла та кăмăллă, канас.
Мăн Атăла çитсен çул хывĕ
Хăватлă тинĕсе хавас.
Тур панă пилпеле вăл сумлăн
Тӳлек шывне тек ăсатать.
Е, çил тухсассăн, хумлăн-хумлăн,
Çырансене çапса хăюллăн
Тулли шывне вăлваскатать.

...Çав паллă шывăн хĕрринче
Пĕр-пĕринчен чылай инçе
Пурнайнă ĕлĕк ик чăваш—
Кăмăлĕпе пулман йăваш.
Нимле ĕçе те тиркемен,
Вăйне-халне те шеллемен.

Вĕсем пултарнă мул пухма,
Кĕскен çырсан — укçа тума.
Укçа вăл, чулсене касса,
Кирлех пулсассăн, тухасса
Аван чухланă маттурсем,
Упранă пурлăхне вĕсем.

Сĕм вăрманпа çыран енче,
Хитре Сăрьсн ытамĕнче
Пурнать хисеплĕ Акамас.
Кăштахçă ун пирки калас.

Тымар вăл янă Кăрмăшра—
Кăтра вăрманлă тăрăхра.
Кунта пурнаççĕ пакшасем,
Сыснаран шултра вĕсем.
Пакша катайнă мăйăрсен
Пурин те ылтăн тĕшĕсем.

...Тепри — юр варлă Карамас
(Васильсурка асра тытас!) —
Унта пурнать мĕн ачаран.
Ку таврара та — сĕм вăрман.

Çак икĕ вăйпитти хуçа
Юхтарнă сулă çу каçа.
Те çирĕм-вăтăр, — пĕрре мар:
Кашни сулли вăл — пархатар,
Сулăçсене — тăварлă тар!

Пĕрне-пĕри, паллах, пĕлейнĕ,
Кĕрекере черкке çĕкленĕ.
Анчах та ĕç вăл ĕçкĕ мар —
Кунта пулас пулать вăр-вар.

II

Пĕр çуркунне шыв тулнăран
Шыва антарнă сулăсем.
Хумсем хăватлăн çапнăран
Çулран пăрнайнă хăшĕсем,
Тăрнайнă ăшăха вĕсем.

Чее те çивĕч Акамас
Çурхи шывран та хăрамасть:
Тарçисемпе шыва кĕрет
Хайхи сулла туртса илет.
Карамаспа юхтарнине
Вăл кăларать çыран хĕрне,
Ан юлтăр, тет, хуçа палли —
Йăлтах илет хăйне валли.

...Ак Карамас тепĕр кунне
Çитет те Акамас тĕлне
Пăхать Сăр шывĕн ик енне —
Ниçта курмасть хăй суллине.
— Ăçта ман сулă? — тет хуça.
Кўрши вара кулать куçран:
— Эс, — тет, — чăнах та çур айван!
Кăна эс ыйт юханшывран.
Суллу сан кайнă саланса,
Çитех-тĕр Атăла юхса!

Кулать чăваш та чăвашран —
Тăшман пулаççĕ çакăнтан.
Ытла та пысăк хирĕçӳ —
Епле тупайăн килĕшӳ?

III

Юмахăн та пурах йĕрки:
Сăмахăм — Акамас пирки.
Аçтан пуçланă вăй илме,
Нумай енчен вăл çĕкленме?
...Малтан, ик-виç тарçа илсе,
Ларать тӳлек çĕре килсе.

Ана çак шыв хисеп тăвать,
Чи çывăх тус пек йышăнать.
Мĕнчуль çăрттан сутать тытса,
Мĕнчуль вăрман сутать касса.

Шыва вăл йывăç антарать,
Хула тĕлне йăлт тултарать.
Кашни çыннах çурт-йĕр тума
Хыр йывăç кирлĕ, сар хăма.
Çу каçипе йывăç сутать.
Арча тулли укçа пухать.
Аста, ӳркевсĕр тарçăсем
Ана валли лартаç çуртсем.
Хăйне валли вăл кирпĕчрен
Ал-хапăлах çĕклет кермен.
Мăн алăк пек чӳречисем
Сапаççĕ, каç пулсан, хĕлхем...
Чун килĕштерне Çеçпине
Качча илет вăл кĕркунне.

...Çеçпи юратнă ачаран
Алса чăлха çыхма çăмран.
Çыхмашкăн чĕнтĕр, тĕрлеме,
Кĕпе те шупăр çĕлеме
Никам ун пек пултараймам.
Ун пек ăста никам пулман.

Пурнать çемье йӳнеçтерсе,
Хăш-пĕрине кĕвĕçтерсе.
Кунсем, çулсем васканăçем

Ӳсеççĕ хӳхĕм хĕрĕсем.
Қашни ĕçчен, кашни типтер,
Çаврăнăçуллă та чипер.

Виç хĕр... Қалайăн — çĕр çырли.
Чи кĕçĕнни — чи илемли.
Тăп-тăпăлкка та ăслăскер.
Ун мăшăр куçĕ — сеп-сенкер.
Йăл-йăл кулли — хĕвел шевли.
Ун ячĕ çепĕç — Улине.
Эп хам курман ун пеккине,
Эсир, тен, курнă пулинех...

Йăрăс ӳснĕ хĕрсене
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Теней, Чепек, Улине
Қам каччине килĕшмĕ?
Анчах пирĕн Акамас
Қачча пама хĕрсене
Сăмах-юмах хускатмасть.
Вĕсене вăл, хĕрхенсе,
Çынсăр аякка ямасть...

IV

Тепĕр пуянĕ — Қарапас.
Пĕр-ик сăмах хамран калас.
Пурнать Чĕкеç мăшăрĕпе
Тата юратнă ывлĕпе.
Пуян хуçа, пуян купса
Çӳремĕ тулăксăр супса —
Вăл тупăшать Акамаспа
Пуянлăхпа тата ăспа.
Иртсе, чупать çул хыççăн çул,
Укçи те пухăнать тем чул.
Тек хушăнать — чухлать Сăръен—
Ун ячĕ-сумĕ кунсерен.

Ӳсет-ха ывăл — Иштиван.
Ашшĕ пекех кĕреш юман.
Вăй-халлă, ăслă та сатур,
Турри сăнне те панă, кур.
Малтан çӳретчĕ ашшĕпе

Тумашкӑн сутӑ кунӗпе.
Ӑстӑн пухсан, ҫӳрет пӗччен —
Пайти пулать, сутма пӗлсен!
Ӑнса пырать ӗҫ-пуҫӗ ун —
Пасар пулинччӗ кашни кун!

...Анчах кӑшт сӳрӗк вӑл ир-каҫ.
Яш чух кирлех-тӗр хӗр-упраҫ.
Ӳтре вӗренӗ чух вӑй-хал
Укҫа тени кӑна сахал.
Пӗр ҫуллахи илемлӗ кун
Вӑл йыхравлать Айтак тусне:
— Қанма ыйтать ӗшеннӗ чун.
Атя, тухар-и Сӑр ҫине,
Қасса ишер-и хумсене...
Айта, каяр-ха тӑвалла:
Чун темшӗн ҫав еннех туртать.

...Кимме, кӗсменҫӗ, хӑвала,—
«Лаши» ҫӑмӑллӑнрах юртать.
Хумсем юлаҫҫӗ ик енне,—
Ҫул хӑратмасть ҫамрӑксене.
Қайсан-кайсан илтеҫ вӗсем
Сылтӑм енче, шыв хӗрринче,
Пӗр пысӑк кимӗ патӗнче
Хаваслӑ, чӗвӗлти сассем —
Шыва кӗреҫҫӗ-мӗн хӗрсем.
Пӗр савӑнса, пӗр тӗлӗнсе
Пӑхать те ҫамрӑк Иштиван:
— Васкар унта!— тет хӗмленсе.
Юлташӗ ӑнкарать аван.

Сыхлавҫӑ асӑрхать кимме.
Чӗнет вӑл хӗрсене килне.
Лешсем тухаҫҫӗ акӑш пек,
Куҫлайӗ каччӑ халь хӑшне?
Кимми, ав, ҫывхарсах килет.
Хуралҫӑ пӑшалпа тӗллет:
— Эсир ан килӗр ҫывӑха —
Сиенлӗр хӑвӑр сывлӑха.
Эсир ӑҫтан? Мӗнле ҫынсем?
Ӑҫта каятӑр, каччӑсем?

Хӗрсем те яшсене сӑнаççӗ,
Чунсем хӗрсе хавхаланаççӗ —
Хальхаççӑн хатӗр паллашма,
Маттурсемпе юмахлама.
Çук, хуралçи те хирӗç мар —
Ыр паллашу вӑл — пархатар.

...Пӗрре курсах Иштивана,
Вӑй-халлӑ сарӑ каччӑна
Куç хыврӗ селӗм Улине,
Вут хыпрӗ çамрӑк чӗрине.
Хӗр тытрӗ пурçӑн тутӑрне,
Çӳле çӗклерӗ, çил çине,
Вӗçтерчӗ Иштиван енне:
— Ыр йӗкӗт, йышӑнсам парне!

Анланчӗ, туйрӗ Иштиван:
Тарма май çук юратуран.
Алла илсе хӗр тутӑрне
Систерчӗ вӑл Улинене
Чун-чӗререн юратнине.
Анланчӗç çамрӑк чӗресем:
Пӗрне-пӗри кирлех вӗсем...

## V

Ир пулать те каç пулать.
Хӗршӗн хытӑ тунсӑхлать
Сарӑ каччӑ Иштиван.
Юратать-çке, мӗн тӑван?
Вут çунать халь чӗринче —
Тӗтреленчӗ çут тӗнче!..

Пӗррехинче вӑл Сӑр хӗрне
Тухсассӑн, хулпуççи çине
Килсе ларать шап-шур чарлан,
Хӑй хут хӗстернӗ сӑмсине.
Хӗртен хыпар çитернине
Тӳрех чухлать те Иштиван,
Ала илет хӗр çырӑвне.
Пӗрле вулар-ха сӑввине.

— Ирхи çап-çутă хĕвел пек
Куратăп эпĕ сан сăнна.
Хĕвелĕн ылтăн шевлипе
Эп ачашлатăп хам чуна.

Юрататăп — сисетĕн, -
Кунсеренех кĕтетĕп,
Тата хăçан çитетĕн —
Эс килмесен сӳнетĕп.
Эпĕ çыртăм каçхине
Сана саван Улине.

...Çак çырупа хавхаланса
Ашшĕпе илесшĕн сăмахласа.
Виç кун иртсессĕн Иштиван
(Ашшĕне вăл пĕлет аван —
Ана-кăна пĕлмен айван)
Кĕрет хăюллăн ун патне.
Пырать те ашшĕне калать:
— Аттем, ан вăрç-ха эс мана:
Чăрмав туса çӳреп сана.
Эп каччă пулнине куратăн,
Мана мĕн кирлине туятăн.
Тӳпе пек кăн-кăвак куçсем
Тыткăнлаç мана вĕсем.
— Сана ăнлантăм, Иштиван,
Хĕрне тупас пулать малтан.
— Хĕр тупрăм — чăннипех çырла.
Ман сĕнĕве, аттем, ырла:
Ыран каяр-и хăтана,
Пики те юратать мана!
— Кам хĕрĕ терĕн, паллашас!—
Пĕлесшĕн пулчĕ Карамас.
— Ун ашшĕ — сумлă Акамас —
Атя, атте, тăванлашас!
— Пĕлетĕп! — терĕ Карамас,
Тарăхнипе чĕтрерĕ сас,—
Нимле майпа та ун хĕрне
Киле кĕртмешкĕн юрамасть,
Турри тăванлашма хушмасть.
Киревсĕр, çăткăн ашшĕне
Манаймăп эпĕ ĕмĕрне.

Мана вăл лартрĕ май таран —
Çак ултава ăçтан манан?
Эс урăх хĕр туп, Иштиван,
Чару пулассăм çук манран...

...Тухать те ывăл, лап ӳкет,
Хурланнипе ӳт-пӳ сӳлет.
Ăс-пуçĕ унăн пăтранать,
Ăшра та, калăн, вут çунать.

Чупсах анать вăл Сăр хĕрне —
Пĕлсе пĕтер этем ăсне! —
Шыва сикет çӳл çырантан,
Пĕр самантрах çĕтет куçран.
Анчах Айтакăн çивĕч куç —
Капла пĕтет-çке çывăх тус!
Çăлас тесе Иштивана
Тӳрех чăмать çав вырăна.

Шывра шырать вăл юлташне
Анса пыруçăн Сăр тĕпне.
Юлашкинчен тем авăкран,
(Çакланнă тусĕ авăра!) —
Çынна çӳçрен ярса илет.
Ăна вăл çӳлелле çĕклет.
Йăлт сывлăш пĕтнипе, аран
Айтак чăмса тухать шывран.
Хăйпе пĕрле вăл çырана
Илсе тухать Иштивана.

Чупса çитет çыра Кашкай:
Ах, çăтнă, çăтнă шыв нумай
Ун тусĕ!.. Пулăшма васкать —
Мел-ăслайне Кашкай чухлать.
Кăшт вăй кĕрсен, Иштивана
Илсе кĕреççĕ вăрмана.
Тупайрĕç пысăк тунката,
Вырнаçрĕç виççĕн тан унта.

Шăмшак çеç мар, ăстăн та пиçĕ —
Виç тусăн халĕ ăсĕ — виççĕ!
Яшсем пуç ватрĕç, канашларĕç,
Сĕнӳсене пĕр хуçрĕç, аврĕç...

Анланăр яшлăх каварне:
Вăрламалла Улинене!

— Анчах унччен çурт лартмалла,
Хитре йăва çавăрмалла.
Укçу-тенкӳ сан пур самай,
Эппин, пĕрле тупатпăр май.
Уçланкăра та ĕшнере
Кермен çĕклентĕр хип-хитре.
Хăт мĕн кала — çак туйăмран
Эс çăлăнаймăн, Иштиван!..
Кала хăв шухăшна пире —
Укçу ан çĕртĕр çӳпçере!..—
Çапла калаçрĕç тусĕсем.
Епле-ха килĕшмĕ этем.

## VI

Ай, каç пулать те ир килет.
Халь Иштиван та тĕлĕнет.
Виç эрнерех хайхи кермен
Ӳссе ларать — капмар, кервен.
Пит хăтлă та хитре, çап-çут
Хăй ячĕпе ларттарнă çурт!
Илтет-ха: ашшĕ кăмăлсăр,
Çынсен чĕлхи те — шăмăсăр:
Кур, тарчĕ, теççĕ, Иштиван
Хăй ашшĕ шутсăр хаяртан...
Ал сулчĕ Иштиван: ара,
Калаччăрин!.. Йĕри-тавра
Тытать çич аршăнлă хӳме —
Çичъют, ан ĕмĕтлен кĕме!
Аплах та мар-тăр, кам пĕлет,
Çын сăмаххи чуна илет.
Кам калĕ тĕп-тĕрĕс ăна —
Хӳми, тен, аршăнлăх кăна?..

Ак, вăхăт çитрĕ... Маттурсем
Çула тухмашкăн хатĕрленчĕç.
Çук, лăпкă мар паян этем —
Çамки те шухăшпа йĕрленчĕ.
Вăл тĕлĕк курнă — ырă мар:
Пулмасть пек уншăн пархатар.

Апла пулин те сар кимме
Хурать кĕсле, ĕçме-çиме.

Амăртмалла пулăсемпе
Тапранчĕç... Янкăр çӳл тӳпе
Улине куçĕ пек сенкер.
Анчах кăшлать чуна темскер.
Сасартăк виç яша кĕтрет
Чун-чĕререн шиклентерет:
Вăшт çеç таса, тăп-тăр шывран
Кимме сиксе ӳкет çăрттан.
— Ан кайăр,—тет,—пулмасть телей,
Халь таврăнсамăрччĕ киле!..
Çапла калать те, самантран
Каллех шывра ишет çăрттан.
Пăлханчĕ кайрĕ Иштиван:
Кун пеккине нихçан курман.
—Пĕр тухнăскер,—тет хăй,—пĕлер,
Çитес çĕре çавах çитер,
Пăтравлă шухăша сирер!..

Каллех кĕсмен шывпа пуплет,
Пулăсене кĕвĕçтерет.
Çитсе пыруçăн Кăрмăша
Халь Иштиван та, апăрша,
Ун-кун пăхать те, пăлханать,
Мĕн пулĕ-ши тесе сăнать
Тавралăха... Кĕтмен хăна —
Шап-шур чарлан вĕçсе çитет,
Тем калас пек, кăвиклетет.
Çыру çырсассăн Иштиван
Калла вĕçсе каять чарлан.
«Сар кимĕ çитрĕ çыр хĕрне»,—
Вăл пĕлтерет Улинене.

...Анчах та ашшĕ — Акамас
Сар хапхине уçма хушмасть.
—Ан кĕртĕр,—тет,—тăмсайсене!
Тытсамăр пушă та пăшал,
Никамăн ан пултăр пуш ал.
Вĕсемшĕн халь ырри сахал —
Тĕке вĕçтерĕпĕр кал-кал!
Ав, тупăннă!.. Çич ютсене

Памастăп эп Улинене!
Хăр-хар тăваççĕ йытăсем,
Тытса çурасшăнах вĕсем.

...Çак вăхăтра шап-шур чарлан
Калла çитет хыпарпалан.
Унта каланă çавăн пек—
Хĕр ăнлантарнă пĕтĕмпех:
«Юратнă тусăм, Иштиван,
Ĕç-пуç ку вăхăтра начар.
Аттешĕн сан аçу тăшман,
Пулаймĕ килĕшӳ вăр-вар.
Атте ăнкараймасть чуна,
Ниçта та кăлармасть мана.
Анне те çав юррах юрлать,
Курмасăрах сана хурлать.
Анчах пĕр вăрттăнлăх уçам,
Пурнăçлама сана хушам.
Илемлĕ Сăр утравĕнче
Пурнать асамçă Ескенче.
Тăван вăл маншăн çĕр çинче—
Чĕрчун та кайăк чĕлхине
Мана вĕрентейнĕччĕ тахçан.
Халь маншăн шăллăм пек Çăрттан,
Халь маншăн йăмăк пек Чарлан...
Хăйĕн ĕçне вăл пултарать,
Е юм юмлать е ăрăмлать,
Эс мĕн ыйтан, çавна тăвать.
Çавах ан манчче тав тума—
Сар ылтăн укçуна пама.
Ман сăмаха тӳптерлетсен*
Сар кайăкпа эс пĕрлешен».

## VII

Иштивана çак ыр хыпар
Савăнтарать — пытарас мар.
Вăл чĕнчĕ çывăх туссене—
Тытаççĕ çул утрав çине.

* Тӳптерлетсен — тӳрре кăларсан, пурнăçлансан, майлашсан.

...Ак виçĕ тус — утрав çинче.
Хуллен шаккаççĕ алăка.
Каллех шаккаççĕ — виç хутчен.
Хуçи сирет măн сăлăпа.
Вара шăп-шăпăрт сасăпа
Чĕнет кĕмешкĕн алăкран.
Хускалчĕ харсăр Иштиван.
Хура ват карчăк йышăнать,
Хăй хăнана пăхать, сăнать.
Шăл витĕр шăппăн сăмахлать:
—Пĕлетĕп сан хуйхуна.
Пăшăрханса ан ват пуçна.
Кĕçех, кĕçех, тен, аçуна
Тата хам пĕлнĕ хуçана
Пама пултарăп ыр канаш —
Ан вăрçтăр ик маттур чаваш...
Ку — каярах... Итле, тăнла:
Ак, ылтăн çĕрĕ, тыт ăна—
Эс маншăн кăмăллă хăна—
Çĕрре çакан чарлан мăйне—
Илсе çитерĕ хĕр патне.
Хĕрӳ сан тăханать çĕрре—
Пулать саркайăк тӳпере.

Нимле чăрмав та уншăн пулмĕ,
Унран нимле тăшман та кулмĕ.
Ыттисене сан пĕлмелле,
Пур чăрмава та çĕнмелле.
Вĕçлерĕм эп сăмахăма,
Халь ирĕк парччĕ кăшт канма...
Аса илет тин Иштиван:
Асамçă ылтăнпа тăван.
Пĕр ывăç ылтăн вăл парать,
Пуçа таять те тав тăвать.
Асамçă карчăк Ескенче
Ларса юлать каллех пĕччен.

## VIII

—Тавах,—тет Иштиван,—сире,
Васкар халь çитмелли çĕре.
Кашкайĕ тытрĕ кĕсмене,

Айтакĕ ларчĕ хӳрине.
Сар кимĕ йăрлатса шăвать,
Хумсене хирĕç çул тытать.
Васкать леш çырана çитме,
Саван хĕре телей кӳме.

Çыра анать те Иштиван,
Ун аллинчен вĕçет чарлан.
Пике патне кĕçех çитет,
Мĕн тумалла — йăлт пĕлтерет.

...Асамçăн ылтăн çĕррине
Вăшт тăхăнать халь Улине.
Хĕртен саркайăк вăл пулать,
Чӳречерен вĕçсе тухать.
Пырса ларать туссем патне,
Пит васкатать вăл вĕсене.
Чăнах та, ашшĕ килĕнче
Шăв-шав çĕкленнĕ — ах, тĕнче!
Хĕре шыраççĕ тарçисем,
Ана сыхлан хуралçисем.

Туссем васкавлăн тапранаççĕ,
Шыв май анаталла анаççĕ:
Пит хĕпĕртенĕ Иштиван—
Хĕвел пек ялкăшать, куран:
Саркайăк унăн аллинче,
Çемçен лăпкать вăл пуçĕнчен.
—Пăх, Иштиван, хыçалалла,—
Час систерет ăна Айтак.—
Пире йĕрлеççĕ кимĕсем—
Хуçан хаяр хуралçисем.
Сисейнĕ хĕр çухалнине,
Шыраççĕ пуль айăплине.

—Вĕçтер кимме çурхи çил пек,
Шывваррипе çип çапнă пек!—
Асли васкатрĕ туссене,
Кĕсмен те тытрĕ аллине.
Çăрттан пек вăрăм кимĕсем
Тек çывхараççĕ-çке, мурсем...
Вĕсем илесшĕн çавăрса,
Е вĕлересшĕн путарса...

Çапла саркайăк ăнланать
«Çăрттансене» чарма шутлать.
Вĕçет вăл тӳррĕн Сăр хĕрне,
Пулса тăрать кĕç Улине!..

Васкать эшкер те ун енне
Тытас тесе хăйсен хĕрне.
Анчах... алла тăсайнă чух
Пике çухалчĕ. Пурччĕ—çук!

Çав вăхăтпа усă курса,
Унтан кил туртăмне туйса,
Сар кивĕ хăвăрт ыткăнать,
Сăр тăрăх çиçĕм пек пырать.
Çапах та пирĕн Иштиван
Шыв хĕрнелле вăрт пăрăнать,
Пике çуккишĕн уйланать:
—Алран-çке ятăм — ах, айван!—
Хăйне вăрçса вăл пăлханать.
—Ытла хăрарăмăр, сĕре!
Савни пĕлмест вĕт çул-йĕре.
Кашкай, халех тапрат кимме,
Тухар-ха хамăр çул çине!

Тем авăкран вĕсем патне
Саркайăк вĕл! вĕçсе анать.
Вăл пирĕн Иштиван умне
Çитсе ларанишĕн савăнть.

Вăйлансах кайнă Иштиван,
Ун пек телее ĕçтан тупан,
Алла илесшĕн кайăка,
Пулăшма хушать вăл Айтака.
Асам ĕçе Кашкай чухлать,
Темле сăмах калать, юмлать.
Çав авăкра саркайăкран
(Сисме те çук тем вăхăтран)
Хĕр пулчĕ тăчĕ самантрах.
Чечек пек тумлă та хитре,
Ун пек хĕр çук-тăр тĕнчере.

Упăн кашни пӳрнинче
Сап-сарă ылтăн çĕрĕсем.

Унӑн икӗ аллинче
Ҫап-ҫутӑ кӗмӗл сулӑсем.
Хул урлӑ янӑ теветне
Ҫӗленӗ бисер, ахахне.
Пӑхсан ҫӑлтӑр пек ялкӑшаҫ,
Утсан хӗвел пек ҫутатаҫ.
Хӑлха ҫаккинчи ик алка
Мӗн пек илемлӗ, ялтӑркка!
Пирӗн чечек пек Улине—
Ҫӗлетнӗ пурҫӑн хӑй ҫине.
Шап-шур пушмак ун урине
Ытла та нӗр кӳрет унне.
Хур пек вӑл ярӑнса утать,
Пур ҫын та ун ҫине пӑхать.

Ҫак мӑшӑра халь кам пиллемӗ?
Ҫынна ҫӗклет мӗнпур илемӗ!

Иштиван ак тӑчӗ юнашар,
Кӑтра та, ҫӳллӗ те япшар,
Алран тытать хӗре ҫемҫен,
Вӗсен умӗнче ҫап-ҫут кермен.
Ҫӗн кермене кӗме чӗнет,
Хӗр килӗшмесрен шикленет.
Кӑвак мрамор пусмасем
Хӑпарса пыраҫ ҫӗкленнӗҫем.
Хӗрпе каччӑ хулран тытса
Хӑпараҫҫӗ майӗпен утса.
Вӗсен ик тусӗ — ик енчен
Ҫак чаплӑ ӗҫшӗн кӳнтелен*.
Керменӗн алӑк умӗнче
Тӑрать сыхлавҫӑ Арӑслан.
Пӗлсемччӗ эсӗ, ҫут тӗнче!
Ҫимелли памасӑр ан шутла.
Айтак кӑларчӗ хутаҫран
Сап-сарӑ мӑнтӑркка автан,
Ҫӑварне тыттарчӗ хуралҫа—
Парне тӑвать сана хуҫа.
Усӑлать мӑн алӑк кӗрлесе,
Ҫӗн мӑшӑра кӗме чӗнсе.
Вӗсем утаҫҫӗ шалалла,

* Кӳнтелен — пӗрлешнине ҫирӗплетекен свидетель.

Кавир тăрăх малалла.
Ят сумлă çамрăк мăшăра
Кĕтсе тăрать тӳре-шара.
Çӳлтен килнĕ пуçлăхсем,
Иштиванăн çыннисем.
Тăванĕсем, юлташĕсем,
Тĕрлĕ йышши сутăçсем,
Чылай ав килнĕ пулăçсем...
Пурте илемлĕ çи-пуçпа,
Çĕн мăшăра чыслас шутпа.
Япшар туй пуçĕ те кунта,
Туй каччисем кĕтеç чунтан.
Çĕн мăшăра чыслама,
Пил туса саламлама
Улинепе Иштивана
Лартаççĕ çӳллĕ вырăна.

Малтан ак тухрĕ Карамас,
Хăй Чĕкеçне те хăвармасть.
Вĕсем пил турĕç çамрăксене
Тату пурăнмашкăн ĕмĕрне.
Юман пек çирĕп сывлăх сунчĕç,
Пĕр-ик ĕмĕр пурăнма хушаç,
Кинне савса параç парне —
Нумай çул пухнă ылтăнне.

Акамас та юлмасть ларса,
Çеçпипеле тухать тăрса.
Çамрăксене пиллет нумай
Ыр шухăшсем калан̆ă май.
Анчах та хытă Акамас
Çĕн мăшăра парне памаç.

Тухаççĕ Айтакпа Кашкай,
Вĕсемшĕн тăрăшаç самай.
Çĕн мăшăра телей сунса
Ниçта ӳкмесĕр такăнса,
Пĕр-пĕрине ялан савса
Пурăнма сĕнеç мĕн ыриччен,
Çăварти шăлсем юлмиччен.
Юмах вĕçне те пĕлмелле,
Юмахăма вĕçлемелле.
Пĕлместĕп эпĕ халиччен:

Те Ескенче пулăшнипе,
Те ырăсен мехелĕпе —
Çамрăксене юратнипе
Хăталлă пулчĕ ик чăваш,
Чăнах та хăйсем янташ,
Қашнин халь кăмăлĕ йăваш.
Çĕр сулă вырăнне ик сулă
Парас тесе сăмах татсан,
Питре йăлттин çуталчĕ кулă —
Ыталашаççĕ ик купса.
Ал тытрĕç Çеçпипе Чĕкеç те.
Вĕсен мĕскер уйăрмалла —
Саппун вĕçпе шăлса илеççĕ
Куçне тăхлачăсем... Пиллеççĕ
Çамрăксене пур кăмăлтан...
Тăванлăх — ыра япала.
Эпир пуян — ыр çын пулсан!

x x x

Туй пуçлăхĕ ав Ярапай
Йăласене пĕлнĕ май,
Ытарласа такмаклать,
Тына çинчен юмахлать.
Тыни ав пурăннă вырăна
Нихçан кĕртмен никама.
Ана сыхланă хуралçăсем
Тата хаяр йытăсем.
Çапах маттур ак Иштиван —
Майне тупать питех аван.
Халь сăмаха тăсар мар:
Туйне хăвăртрах пуçлар.

Янрать, кĕрлет чаплă туй —
Икĕ пуян пĕрлешет.
Эс, хаклă тусăм, кил те кур —
Хусах пурнăç сиктерет.
Туй кĕрлерĕ виçĕ кун,
Ялйыш ĕшенчĕ ташласа.
Хĕпĕртерĕ миçе чун —

Ваттисене пуç тайса,
Çĕн мăшăра ыр сунса.
Эп те пултăм çав туйра,
Астиврĕм, ĕçрĕм пыл сăра.
Сăри, тем, çăвара лекмерĕ,
Сухалăма та йĕпетмерĕ...

## ВИҪҪĔН ПĔР ТĂВАН

### (Халап)

Сăкăт вăрман çумĕнче,
Пăнар шывĕ хĕрринче
Аткас чăваш ялĕнче
Ват Левешке йăхĕнче
Пурăнаççĕ виç тăван —
Кирук, Çирук, Ăртиван —
Пурте ырă та аван.
Çак тăвансем пĕрле пулса,
Канаш тăваç киле юлса.
Кирук калать ыттисене,
Асли шутлать паян хăйне:
— Атьсем, паян тухар çула,
Пире паллатăр ял-хула.
Сума сăвар-ха çынсене,
Йывăрлăха лекнисене!
Хăшсен ытла шăпи начар —
Мĕн те пулин туса парар,
Хăш-пĕр ĕçпе те пулăшар.
— Эпир мĕнпех аль пулăшар?
Кирук, кала-ха, ан пытар?! —
Тӳрех ыйтать унран Çирук,
Кунти ыйтнишĕн вăрçас çук.
— Эпир вăй-халлă яшăсем,
Вĕрет пирĕн чĕремĕрсем,
Ĕçе пĕлеç аллăмăрсем,
Час тавçăраç пуçăмăрсем.
Пурте курнать — тухсан çула.
Кама мĕнпе пулăшмалла, —
Кĕскен çеç хуравлать Кирук,
Унпа халь килĕшет Çирук.

Вĕсем пĕрле çула тухаççĕ,
Тавралăха пăхса сăнаççĕ,
Ӳсет ем-ешĕл вир, урпа,
Малта тăрать пĕр урапа.
Яшсем пит васкаса пыраççĕ:
Хирте ӳсет пăрçа иккен.
Çаксем вăрра тӳрех кураççĕ:
Пĕри пăрçа тултать пĕччен,

Пăрçа татать вăл çĕклемпе
Пĕрле çиме ачисемпе.
Татса тултарнă пĕр кăшкар,
Пырса тытаççĕ: «Тек ан тар!»
Хайхи этем хыт шикленет:
— Пĕрремĕш хут — каçарăр!—тет.

Кирук ăна хытах калать:
— Эс маншăн атте пек пулатăн,
Çын пăрçине мĕншĕн вăрлатăн?
Нивушлĕ намăс мар сана?!
Эс халь кĕретĕн-и тăна?
Тепре тытсан — чукмар сана —
Тӳрлев çуртне е «хăнана».
Вĕçтер-ха килелле кунтан,
Хаса* пулать тепре курсан...
Хытах юнарĕ Ăртиван
Çак хресчене тарăхнăран.
Хура сухаллă мăн арçын
Сиксе ларать ав лав çине —
Ӳпке тулли сывларĕ тин.
Туртса çапрĕ те лашине
Вĕçтерчĕ хăвăрт ял енне.

Виç каччă, виçĕ пĕр тăван —
Кирук, Çирук та Ăртиван —
Çулпа пыраççĕ малалла,
Çитсе тухаççĕ пĕр яла.
Ял умĕнче ларать арман,
Ăна чылай çул ĕçе яман.
Хăрах çуначĕ ун юлман,
Тепри те çĕрĕшнĕ... аран...
— Атя, юсар çак армана!—
Çирук чĕнет Ăртивана.
Ĕç-пуç килет халь Кирукран,
Ыйту пулсан та ăнсăртран.
— Ăна тума никам ыйтмасть,
Кихот пичче халь тупăнмасть,—
Тӳрех ак хуравлать Кирук —
Чĕнмен çĕре хутшăнас çук!

* Хаса — наказани.

Вёсем çитеç вăтам яла,
Садра ӳсет çырлаҫ хăмла.
Пахча тулли анис, шафран.
Чăваш нихçан та улмаран
Сахал пулсан та аптраман.
Вёсем кураççĕ урамра:
Қашнин умра çăка, йăмра.
Йăмра çинчен-çке сăвăçсем
Час-час хайлаççĕ сăвăсем.
Çаксем пыраç Анаткаспа,
Тап-такăр та хитре çулпа.
Утса килен хĕрарăма
Шутлаççĕ виççĕш те чарма.
Хĕрарăм вaтă, çамрăк мар,
Тумланнă лайăх, япăх мар.
Çак яшсене вăл тинкерет,
Сăмахлама хăй пикенет:
— Эсир каçарăр-ха мана,
Хистет халь вăхăт, самана...
Мана хаяр çил тапăнать,
Кĕлет çине сĕвсе ывтать.
Пĕр уйăх ĕнтĕ çын шырап,
Анчах тупма çук никама —
Вăрçса яраççĕ çеç хама.
Пĕр çын тупасчĕ витекен —
Ана тав тăвăп виличчен.
— Ун пек пулсассăн, кинемей,
Сана курсах тăрать телей.
Пире эс кĕт ыран ирех,
Ĕçе пуçлатпăр хĕвелпех.
Пире мĕн кирлĕ — хатĕрле.
Мĕскер çитмест — тупар пĕрле,—
Ал тытрĕ çепĕççĕн Кирук —
Ултав сăмахĕ пулас çук.

Хайхи илемлĕ ăшă ир
(Анчах вăранчĕ ялпа хир),
Çак ушкăн кинемей патне
Çитет тытса хăй сăмахне.
Вăшт! улăхаç кĕлет çине
Тĕрĕслемешкĕн тăррине.
Тăррин кăшкарĕ чиперех —

Хĕç тимĕр витмелле тӳрех.
Вĕсем чупаç ял лавккине,
Туянчĕç кирлĕ таварне.
Ик яш — çӳле, кĕлет çине,
Кирук парать витмеллине.
Хăма çапаççĕ йĕркипе —
Лаçра сыхланнă çĕннипех,
Çап-çутă тимĕр — ун çине,
Çапаççĕ тыткăч кĕтесне.
Пăхсан куçа та шартарать,
Çие ларсассăн шутарать.
Яшсем ĕçлеççĕ тăрăшса,
Пĕрне-пĕри пит пулăшса.
Ĕçе вĕçлеççĕ сĕм каçчен,
Кĕлет халь ларĕ çĕр çулччен.
Пурне тав турĕ кинемей —
Сăваплă ĕç юлать манми.

Хайхи маттур çак каччăсем,
Ӳссе çитейнĕ йĕкĕтсем,
Çула тухаççĕ ир енне —
Инçет чĕнет тăвансене...
Çынна ыр кăмăлĕ хистет,
Хитре ĕçсем тума сĕнет.
Çитеççĕ тепĕр мăн яла,
Пăхса утаççĕ тăвалла.
Урамĕ анлă. Ик енне
Илем кӳрет хыр, вĕрене.
Вĕсем умне ак васкаса
Инке тухать куçне шăлса.
Хыçран йĕрлет ав упăшки,
Патак вăл йăтнă, хăвалать.
Начар иккен ĕçки-çики —
Суранлатма та пултарать.
Хайхи маттур çак каччăсем
Тăраççĕ мĕн тăвас тесе:
Шăв-шавлă, нĕрсĕр арçынна
Кăштах, тен, кĕртмелле «тăна»?
Малтан сăмах илет Кирук,
Кайран хытах вăрçать Çирук:
— Кала, эс мĕншĕн арăмна
Хĕнетĕн, пӳтсĕр, тăмана?!
Хăвна пĕрре хыт лектерсен,

Пит хытă янахран тивсен
Вара каять-им кăмăлна.
Хуçса ярсан малти шăлна?
Унтах чĕнеççĕ арăмне.
— Қала эс вăрçă сăлтавне,
Куççуль мĕскершĕн юхнине?
— Сăлтавĕ пĕр: эрех ĕçни,
Пĕрмай киревсĕр хирĕçни...
Кирук илет хăй сумкинчен
Шап-шурă çăнăх пек эмел:
— Кунне ĕçетĕн виç хутчен —
Чиртен сывалăн: ырă мел.
Аллу кун хыççăн çĕкленмест —
Тек никама та хĕнемест...
Ик çамрăк мăшăр çаксене
Тав сăмахне калать тинех.

Хайхи яшсем çулпа пыраççĕ,
Малта юлан ута кураççĕ,
Лаши те ав сывлать хаш-хаш!
Хуçи, пăхсан, — кунти чăваш —
Çитсе тăрать яшсем умне,
Чĕнсе калать йĕкĕтсене:
— Эсир, ыр чунлă ентешсем,
Тен, пулĕç сирĕн те ĕçсем,
Анчах та пулăшма ыйтатăп,
Çĕре çити пуçа таятăп...
Темле хăрушă вăрăсем
Сиксе тухаç кĕтӳ умне.
Такасене тытаç вĕсем,
Çыхса хураççĕ лав çине.
Тархасшăн, пулăшăр пире —
Сире тав тăвăпăр сĕре!
— Эсир мĕн ыйтнă — çав пулать,
Сире çак ушкăн пулăшать,—
Кĕскен çеç хуравлать Кирук —
Нимле сăмах та урăх çук!
Кашни пăшал пемелллине
Илет — вăрçма хатĕрленет.
Вăшт! çеç çĕкленчĕ виç тăван,
Çил шăхăрать васкапăран.
Умра уй-хир, умра вăрман...

Хурахĕсем инçех тарман.
Малта вĕçет ав Артиван,
Курать вăл лавсене аван.
Вĕсем умне анать вĕçсе —
Эшкер çулне тӳрĕх пӳлсе.
Тӳрех тĕллеç хурахсене
Пама ыйтса çаратнине.
Асли ăнланчĕ: ĕç тухмасть,
Ку чух тарма та юрамасть.
Такасене салтса яраççĕ —
Хăйсем ак каялла чакаççĕ.
Ĕрĕхтереççĕ утсене.
Персе тухаççĕ çул çине...
Тараççĕ сăхă вăрăсем.
Епле халь савăнмĕ этем?
Сĕм вăрмана кĕрсе тарсан —
Çухалчĕ час эшкер куçран.

Хайхи хисеплĕ виç тăван —
Кирук, Çирук та Артиван —
Каллех çул тытрĕ мал енне
Çĕн вăй парасшăн çынсене.
Чăрмавлă ĕç тесе тăмаççĕ,
Хăйсен тĕлевĕнчен чакмаççĕ,
Пулсан та йывăр кĕрешӳ—
Майне тупать çак пĕрлешӳ...
Лару-тăру мĕнле ыйтать —
Ыр йыш çĕнтерĕве туптать.
Паха ĕçе эпир ырлар —
Çамрăксене телей сунар.
Весен пархатарлă тăвăмне
Çынсем манас çук ĕмĕрне.
Илемлĕ лăпкă вырăнта
Сипетлĕхе туйса чунтан
Вĕсем иртеççĕ савăнса,
Чăвашлăха сума суса.
Сар хумлăн хумханать уй-хир:
Ӳсет ыраш та сĕлĕ, вир...
Тыр-пул, тыр-пул ăнса пиçет,
Ял çыннине хавха кӳрет.
Сасартăках васкавă май
Кураççĕ тырă çуннине —
Çатăртатса ялкăшнине.

Пĕр-пĕр услап е пăлахай,
Тен, чĕлĕм туртнă та — ай-хай!—
Пăрахнă-тăр пирус тĕпне
Пуçне таян ыраш ăшне.
Çунать, çунать ыраш пусси:
Халь пĕр тĕллев — сӳнтересси.
Пулинччĕ тăрăшнин усси!
Кирук ал сулчĕ: — Тытăнар!
Çумран йĕри-тавра тăрар,
Тырра тымарĕпе кăклар!

Канав пекки чавса пăхар.
Канав чаваççĕ таврара,
Тĕпрен кăклаççĕ сар тырра.
Хăш вырăнта ыраш çунать —
Çак ушкăн çулăма таптать.
Самант канмасăр тăрăшса
Тырра хăварчĕçех çăлса.

Кирук, Çирук та Артиван
Каллех утаççĕ малалла.
Вĕсем çитеç сырма хĕрне.
Ӳсеççĕ хурăн, вĕрене,
Хайхи çырма варрипеле
Пĕве выртать туллипеле.
Шыва кĕреççĕ ачасем,
Ишеççĕ, ăмăртаççĕ тем.
Анчах харсăрскер пĕри
Вăйсăрсене таптать юри.
Çынран ахăлтатса кулать,
Пурин çине те ал сулать.
Тытать те тепĕр ачана
Ярать чи тарăн вырăна.
Шывран леш тухнă-тухманах
Каллех вăл чăмтарать ăна.
Хайхи ача ырса çитет —
Хута кĕме ыйтса йĕрет.
Анчах та пĕчĕк ачасем
Тăраç куштанран шикленсе.
Çакна кураççĕ пит аван
Кирук, Çирук та Артиван,
Тарăхаççĕ пуçтах çине —
Халех ăна тытса хĕне.

Кирук çакна ярса тытать —
Пĕве тĕпне ярăнтарать.
Часах Çирук ишсе пырать —
Çӳле çĕклет те чăмтарать.
Йăлттин шывран сиксе тухсан,
Ак Ăртивана лекет куштан...
Хайхи йăх-ях ярать йĕрсе,
Ан чăмтарсамччĕ тек тесе:
— Тепре чăмтарсан — эп пĕтеп,
Сив авăра лексе вилеп.
Хĕрхенĕр — эп ыйтап сиртен —
Капла хăтланмăп ӳлĕмрен.
— А, хĕрхенме ыйтан, çăхан?
Епле хĕрхентĕн ачана?
Куççульпе йĕртрĕн вĕт ăна!
Ăçтан сана халь ĕненен?
— Чăнах, ыйтатăп эп сиртен.
— Эппин, пул тӳрĕ — тупа ту!
Хайхи калать: тупа тăвап,
Ыр ĕç тумашкăн шак хурап.
— Вĕçтер апла-тăк, шăпăрлан,—
Çак тупана нихçан ан ман!

Пырать ак пирĕн пĕр тăван —
Кирук, Çирук та Ăртиван.
Вĕсем çитеççĕ пĕр яла,
Пĕр шухăш — ырă тумалла.
Тĕл пулнă ялăн хĕрринче,
Шултра йăмрасем айĕнче
Пер ватă карчăк пурăнать,
Ун килĕ-çурчĕ юхăнать.
Ачи-пăчи те ун пулман,
Упăшкинчен те юп курман.
Вăл вилнĕ иртнĕ вăрçăра,
Ытла хаяр çапăçура.
Унран киле çитет хыпар —
Юлман унран пачах тымар.
Халь ватă карчăк Алтатти,
Ана хĕсет кун-çул хытти,
Çӳлтен килмен телей çути,
Ялти влаçран пулман хӳтти.
Каллех виç паттăр пĕр тăван —

Кирук, Çирук та Ăртиван —
Çитсе тăраççĕ пÿрт умне,
Тĕксе пăхаççĕ хапхине:
— Килтех-и, теççĕ, хуçисем?
Кăштăртатса тухать этем —
Шап-шурă çÿçлĕ кинемей,
Хуллен пуçлать вăл пуплеме:
— Сире эп кирлĕ-и, атьсем?
Тÿрех сас парăр: эп пĕлмен.
Пурнатăп эпĕ тăр пĕччен —
Хура шăпам ман — виличчен.
— Итле пире эс, кинемей,
Пурнăçу сан пĕтес пек, эй!
Сана туса парасшăн пÿрт —
Ĕçе тума пире çеç кÿрт.
Пире валли пĕçер шÿрпе,
Унта яран сив çу, кĕрпе.
Тепĕр чухне пĕçер какай —
Пире вăй кирлĕ пĕрех май.
Ĕçе пуçлатпăр паянах,
Пÿрт лартатпăр çак вырăнах.
Санран ыйтмастпăр сум-укçа —
Пулсам ыр кăмăллă хуçа.
Ман йыш санран хурав кĕтет,—
Кирук хăй сăмахне вĕçлет.
— Мăнукăмсем, эп килĕшетĕп,
Ытла та шутсăр хĕпĕртетĕп.
Тăватăр çурт укçасăрах —
Çакна ĕненме май çукрах.
Тен, вăрттăн шухăш упранать —
Кайран çеç ăнланма пулать.
Кирек мĕн пултăр — пур пĕрех —
Ĕçе ак тытăнăр ирех,—
Вăл сывлăх сунчĕ кашнине,
Пурне те чĕнчĕ картишне,
Кайса кăтартрĕ сарайне,
Ăçта ĕç хатĕр выртнине.
Кирук ак илчĕ касмалли,
Çирук та тытрĕ татмалли,
Сава лекет Ăртивана,
Умне хурать вăл пăрана.
Ĕçе пуçлаç тÿрех яшсем,

Хĕрсех пыраç ĕçленĕçем.
Ак пӳрт тăрри те ишĕлет,
Часах кăшкарĕ илĕнет.
Сӳтсе тăкаççĕ кив пӳрте:
Кив пĕрене каймасть пĕртте.
Кирук, Çирук та Артиван —
Эпир юратнă пĕр тăван —
Вĕсем васкаç вăрман касма,
Илемлĕ, хăтлă пӳрт лартма.
Яшсем касаççĕ хырсене,
Хутран-ситрен чăрăшсене.
Касаç çич метр тăршшĕне,
Хитре чутлаççĕ пĕрене,
Пурне тиеççĕ лав çине,
Час çитереç ваттин килне.
Яшсем ĕçленине кура
Часах пулса тăрать пура.
Иртет-иртмест-и çичĕ кун —
Кĕрет пӳрте ак ырă чун.
Пӳрчĕ çап-çутă та илем,
Чӳречисем сапаç хĕлхем.
Пӳртĕн тăрринчи автан
Янратрĕ таврана ян-ян.
Тинех хавасла кинемей
Тупать хăйне валли телей.
Ачасене вăл тав тăвать,
Пĕр иксĕлми телей сунать.

Халап вĕçленчĕ — курнăçу,
Пурне сĕнетпĕр ăнăçу.
Эпир вара маттурсене
Пур çынсенчен кӳрер парне.

Шупашкар,
1998 çулхи
пуш уйăхĕн 30-мĕшĕ.

## ВАТĂ ЮМАНЛĂХ ЫЙТАВĔСЕМ

Эп — ватă, авалхи юманлăх.
Қашлатăп шухăша кайса.
Кун-çулăм пур шухăшламалăх,
Пулман вăл нихăçан ансат.

Пурнăçăмра мĕскер курман-ши?
Чун сӳлетет аса илсен.
Мĕскер кăна кунта туман-ши?—
Тискер е кăмăллă ĕçсем.

Ак халь ман сукмакпа пыратăр
Эсир, хаваслă ачасем.
Йĕкел е курăк пуçтаратăр
Ем-ешĕл ĕшнене кĕрсе.

Сире эп питĕ юрататăп,
Сунатăп ырă пур ĕçре.
Халь темиçе ыйту паратăп.
Тен, пулăшĕç вĕренӳре.

1

Пĕррехинче çарсем капланчĕç
Юманлăхри пур çулсене,
Уя тухсассăн, сапаланчĕç,
Васкарĕç Атăл хĕррине.

Хăватлă çар кĕрлерĕ-иртрĕ,
Пире хăварчĕ хыçала.
Тăшмансене çĕнтернĕ терĕç,
Вĕсем çакланнă хыт алла.

Çак паллă ĕç хăçан-ха пулнă?
Камсем «ăс панă» хансене?
Ун хыççăн çакăнта мĕн юлнă?
Мĕн кĕтнĕ «вак» халăхсене?

2

Çул хыççăн çул иртейнĕ хăвăрт.
Эпир те — юмансем — ялан
Çĕклентĕмĕр,

Пулсан та тăвăр,
Чăтса сивве те тăвăла.

Çапла пурнаттăмăрччĕ туслăн
Чĕрчун, этем хӳтти пулса.
Анчах та çитрĕ пысăк хурлăх,
Çӳçенчĕ чун çакна курсан.

Юманлăха хуçа пек çитрĕç
Хальччен курман темле çынсем,
Пире пит тимлĕн пăхрĕç, виçрĕç,
Шаккарĕç чукмарпа вĕсем.

Пахалăха иккен сăнарĕç,
Вара хăварчĕç паллăсем.
Чылайăшне — мĕн кăмăлларĕç
Кĕтмен, чĕнмен çав хăнасем.

Вĕсем кайсан эрне, тен, иртрĕ,
Ак килчĕç вăйлă çамрăксем.
Юманлăха чĕр вилĕм çитрĕ:
Янрарĕç пуртă-пăчкăсем.

Тĕреклĕ юмансем йăлт ӳкрĕç,
Пĕр юманне вунвиç лавпа
Пин çухрăма васкавсăр туртрĕç
Тарпа, юнпа та пушăпа.

Çапла шав сĕтĕрчĕç пĕрерĕн
Юманлăхри йывăççене,
Çапла пĕтерчĕç пит тискеррĕн,
Амантрĕç ешĕл хунавне.

Юмансене камсем хакланă?
Мĕн-ма кастарнă вĕсене?
Камсем ăçта çити турттарнă?
Сиртен кĕтетĕп хуравне.

3

Çулсем татах, татах васкарĕç.
Пит анлă турĕç çĕн çула,
Ик енĕпе шур хурăн лартрĕç:
Патша килет иккен çулла.

Пĕр ăшă кун сасартăк çитрĕç
Япшар тумланнă этемсем.
Çут хĕçĕсем хăрушшăн çиçрĕç,
Пĕр пек тумланнă улансем.

Юманлăхра кусать карета,
Ăна туртать вуник лаша.
Çак обоза сыхлаççĕ хытă:
Каретăра — майра патша.

Ĕлккен карета лăпкăн иртрĕ,
Юрларĕç çепĕç шăпчăксем.
Юман рацци хавассăн çиçрĕ
Иртсессĕн чаплă хăнасем.
Атьсем! Кам иртнине пĕлсен,
Сире тав тăвăп чĕререн.

4

Çав çулсенче çĕршыв кĕрлерĕ,
Вут-хĕм алхасрĕ таврара.
Тек чухăн халăх тӳсеймерĕ:
Вăл питĕ йывăр асапра.

Улпут таврашĕ те пит хĕсрĕ,
Кантурĕ ыйтрĕ куланай.
Тем тĕрлĕ пусмăра çын тӳсрĕ,
Вăрçма çĕкленчĕ çавна май.

Çĕкленчĕç вырăс, пушкăрт, çармăс,
Чăваш, удмурт, калмык, тутар.
Каларĕç: «Тек тӳсмешкĕн намăс,
Каяр та вирлĕн тустарар».

Казак маттуррăн ертсе пынă
Пăлханнă тĕрлĕ çынсене.
Пуян кил-çуртĕсем кĕл пулнă,
Шар курнă улпутсем тинех.

Анчах ытла нумай каяймăн
Çава е пуртă-сенĕкпе,
Нимле те хирĕç эс тăраймăн
Хĕç-пăшала çав хатĕрпе.

Аркатрĕ Михельсон хаярран
Пăлхавçăсен пур ушкăнне.
Вĕлерчĕ, çакрĕ.
Вăй юлмарĕ.
Пуç касрĕç тĕп атаманне.
Хăçан-ши пулнă çакă ĕç?
Эсир хурав парсамăр кĕç.

5

Çулсем иртсен каллех эп куртăм
Пуç янă мĕскĕн çынсене.
Вĕсен енне ман пулчĕ туртăм,
Хĕрхентĕм эпĕ вĕсене.
Вĕсем çулпа аран пыратчĕç
Сăнчăрпала, кив тумпала,
Час-час сив шыв пама ыйтатчĕç:
Пит шăрăхчĕ кунсем çулла.

Ку çамрăксем илесшĕн пулнă
Ун чухнехи патша влаçне,
Сенатăн площадьне йăлт тулнă,
Тухмашкăн ыйтнă патшине.

Патша тухман, вăл çирĕп ларнă
Илемлĕ, аслă трон çинче.
Тарçисене пеме калană,
Пуçланнă вилĕмлĕ тĕнче!

Пăлхавçăсем чăлпар саланнă
Ку площадьрен пур еннелле.
Пĕр самантрах пăлхав арканнă —
Тĕпчемелле, йĕрлемелле.

Тĕпченĕ те — явап тыттарнă,
Асатнă йышлăн Çĕпĕре.
Аслисене майран çактарнă —
Пăлхав ан пултăр ӳлĕмрен.
Çак ĕç ăçта, хăçан-ши пулнă?
Историе камсем-ши юлнă?

## 6

Юманлăх витĕр кам иртмест-ши!
Ман асăмрах-ха пĕр кӳме.
Кăтра этем.
Хуйха пĕлмест-ши?
Юрлать.
Тăнлатăп этеме.

Çĕре вăл анчĕ те пуç тайрĕ
Çул хĕрринчи юмансене.
Ирхи вăрман пайтах тăнларĕ,
Ытарайми сăввисене.

Часах чакак килсе пĕлтерчĕ:
Çак çын тĕпчет Пăкач йĕрне.
Халь Питĕртен тепри те килчĕ,
Çитесшĕн вăл Шĕнерпуçне.

Пĕри поэт, тепри тĕпчевçĕ,
Пĕлеççĕ лайăх пĕр-пĕрне.
Кунта халь килнĕ çулçӳревçĕ,
Кĕме шутларĕ тус патне.

Камсем ши пулнă çак çынсем?
Мана пĕлтерĕр, ачасем.
Сире Юманлăх тав тăвать,
Телей те ăнăçу сунать.

(Унăн ачисене панă ыйтăвĕсем)

Умра выртать ак «Çилçунатăм»
Мĕн пек илемлĕ те паха.
Юратнă манăн та журналăм.
Кашни статьи ун ахах.
Ана алла илсе эп тухрăм
Юратнă хамăр пахчана
Çăка çине çĕкленсе лартăм,
Вулатăп кашни статьяна.
Хăватлă юхăм килсе йатрĕ,
Мана çĕклерĕ сывлăша.
Вăрман енне çулне вăл тытрĕ —
Темле хавас кӳрет ăша.

Вĕçетĕп эп анлă хир урлă,
Мăнаçланса ларать вăрман.
Унта мĕн чухлĕ ырлăх-пурлăх —
Мулне никам та шутламан.
«Çилçунатпа» вĕçсе эп лартăм
Чи ватă мăн юман çине
Сăмахлама унпа пуçларăм
Пĕлес тесе ун пурнăçне.
— Эх, мăнтарăн, çамрăк çыннăм,
Халапăма мĕнрен пуçлас?
Чи сумлă патриарх ман чинăм —
Манран ватти те çук пулас.
Сăмахăм пулĕ манăн вăрăм
Итлеме эс ан ӳркен.
Выçса, тен, кайĕ санăн хырăм —
Сехет иртнишĕн ан хĕрхен.
Пĕр ирхине атте вăратрĕ
— Тăрсам эс,— терĕ, Юлманай,
Сана таптаç, тесе хăратрĕ
Çарсем кĕрлесе çитнĕ май.
Темле çарсем кунта та çитрĕç
Вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть.
Çап-çут хĕçсем хăрушшăн çиçрĕç
Урра! янравĕ чарăнмасть.
Пуçĕсенче çаврака питлĕх —
Пурин те тăраллă, вĕçлек.
Кăкăрсене хуплакă хӳтлĕх:
Илемлĕ, çирĕп те кĕрнек.
Аллисене пăшал та сăнă:
Пăхсассăн чĕтресе каян.
Мĕн пек хăватлă тумлантарнă —
Аçтан çапса сиен тăван?
Тĕреклĕ çар кĕрлесе иртрĕ
Анаталла, Хусан енне —
Пĕр уйăхран хыпар та çитрĕ
Парăнтарнă терĕç хансене.
Çак паллă ĕç хăçан-ха пулнă!
Камсем «ăс панă» хансене?
Хусан эмирĕ влаççăр юлнă —
Камсене пуç çапнă малашне?

## 2

Çул хыççăн çул иртейрĕ хăвăрт,
Ӳсейрĕм эпĕ пĕрене пек.
Мана ӳсмешкĕн пулчĕ тăвăр —
Атте çул пачĕ пĕлнĕ пек.
Капмар çынсем вĕçтерсе çитрĕç,
Часах ак тухрĕç кӳмерен.
Юман ращине куçпа виçрĕç
Мăнттай та çирĕп ӳснĕрен.
Пĕр çӳллĕ капмарскер аттене виçрĕ
Ун урлăшне, çавракăшне.
Чукмар илсе шаккаса пăхрĕ
Пĕлес шутпа пахалăхне.
Атте вулли пĕр пек янрарĕ,
Ним палăртмасăр кăлтăкне.
Ыттисене темскер памарĕ,
Мăн паллă çапрĕç ун çине.
Чылайăшне ак паллă турĕç,
Пахисене çеç суйласа.
Вĕсем патне касса çул уçрĕç,
Ыттисене йăлт тасатса.
Вĕсем кайсан, вун кун, тен, иртрĕ
Ак килчĕç вăйлă çамрăксем,
Юманлăха чĕр вилĕм çитрĕ:
Янрарĕç пуртă-пăчкăсем.
Пур юмана та касса татрĕç,
Атте те ӳкрĕ лаплатса.
Инçе çула таçта ăсатрĕç
Вунвиç лавпа час турттарса.
Çапла шав сĕтĕрчĕç пĕрерĕн
Юманлăхри йывăççене.
Çапла пĕтерчĕç пит тискеррĕн,
Амантрĕç ешĕл хунавсене.
Юмансене камсем хакланă,
Мĕн-ма кастарнă вĕсене?
Камсем ăçта çити турттарнă?
Сиртен кĕтетĕп хуравне.

# Ю п т а р у с е м

## ХУРАМА

Çул хĕрринче,
Мăн варăн пуçĕнче,
Шăтса ӳсет пĕр пĕчĕк хурама.
Чăрмантарман вăл никама,
Анчах темле иртен-çӳрен
Ăна касса иртет тĕпрен.
Тепĕр çулне ăш çуркунне
Тункатана сипетлĕ çĕр-анне
Парне парать хăй сĕткенне.
Тункатаран тухать хунав.
Кăштах ӳссен—каллех ăна чăрмав:
Апат шыран пĕр пӳтсĕр качака
Тата мăкла така
Пĕр шелсĕр çаратаççĕ яп-яка.
Çулсеренех çапла е сурăх, е ĕне
Çисе ярaççĕ унăн тăррине.
Пĕр вунă çул иртсен çеç хурама
Вăй илсе пуçлать аталанма.
Çап-çут хĕвел, сипетлĕ çĕр-анне
Ăна параççĕ ырă кун-çулне.

х х х

Халь те васкаççĕ хăш чухне
Пӳлмешкĕн çамрăкăн çулне
Чунне çухатнă пуçлăхсем
Е икĕ питлĕ этемсем.

## КĔНЕКЕ ХУРЧĔ

Куллен çӳрет вулав çуртне
Вăл кĕнеке патне.
Ярса илет час çĕннине,
Пăхмашкăн хитрине.
Уçать — хупать, хупать — уçать.
Кĕтессине хуçать.
Ӳкерчĕксем суйлать, касать,
Листисене татать.
Эрне иртсессĕн мунчала
Илсе пырать вăл каялла.

х х х

Хăш-пĕр тăрлавсăр ачасем —
Кĕнекесемшĕн чăн сиен хуртсем.

## ҪАЧАКАПА ТАКА

Ҫачакапа Така пӗрле ӳсеҫҫӗ картара —
Хӑйсем пит туслӑ та вара.
Апат тавраш҃ӗ пӗр ҫӑвартан,
Пӗр-пӗринпе пӗр шухӑшлӑ, пӗр тан.
Анчах ҫак туслӑха
Ытла та кураймасть Сысна.
Ҫачакана чӗнет вӑл хӑнана.
Ӗҫсен-ҫисен, пуҫсем хӗрсен
Ҫапла пуҫлать вӑл вӑшкӑртса хуллен:
— Эх, тусӑмҫӑм, ӗнен мана,
Хыпар эп илтрӗм, — пӗлтерет Сысна,—
Суймастӑп, сан ҫинчен пӗри,
Сӑмах сарать юри:
Эс купӑста вӑрлать тет вӑл сана,
Ҫаратнӑ тет эс кӳршӗ пахчана...
— Чим, эс каласамччӗ хӑвӑртрах!
Ну, кам сарать кун пек усал сӑмах?—
Халь Ҫачака пӗлесшӗн хӑвӑртрах.
— Кам тен? — Хӑвӑн тусу — Така,— чеен кулать Сысна,—
Вӑл, путсӗр, вараласшӑн сан чысна.
Ҫапла, санран кулать ҫеҫ юлташу,
Унтан эс ан кӗт ырлӑх, пулӑшу.
Ӑна парах та — туслашар пӗрле,
Ас парар-ха кӗҫӗрех, ҫӗрле.
Ҫилленнӗ Ҫачака Така патне кӗрет,
Аяккинчен тӳрех ӑна тӗкет,
Хытах вӑл лектерет.
Таки те ҫийӗнчех сиксе чышать,
Вӑл Ҫачакан тирне самай ҫурать.
Вӗсен умне Сысна тухса тӑрать.
Мӑкла пуҫа вӑл чышрӗ хырӑмран,
Ҫачакине лектерчӗ аякран.
Ҫапла вӑл туссене
Аса «вӗрентрӗ» пӗчченех.

x x x

Упра эс туслӑха ялан,
Хӑрушӑ мар вара тӑшман.

## АВТАН

Ĕçе пĕлмен автан
Илтет пĕрре таçтан:

Критик пулас тесен,
Тиркеш пĕрмай чеен.
Кала эс автора:
«Ĕçӳ начар вара...»
Шиклентĕр вăл санран —
Хисеплĕ критикран.
«Камран ĕçе пуçлас?
Мухтавлă ят тупас?» —
Курать вăл Чĕкеçе,
Кулса калать çемçен:
— Тишкертĕм сан ĕçне,
Анчах шĕвек... пиçмен!
Чĕлхӳ шупка... начар,
Тупма çук пĕр сăнар!
Тарла-тарла ĕçле,
Васкавлăн ан вĕçле!
Унтан шăпчăкпалан
Сăмах пуçлать Автан:
— Юлташ, итле мана,
Асра тытсам çакна:
Аста калас тесен,
Юрла эс чĕререн.
Вĕрен-ха Куракран:
Юрлать вăл пит аван!
Хирте юрлать Тăри,
Таçта янрать юрри.
Çитсе тухать Автан,
Кулма пуçлать унтан:
— Ан тăрăлтат, айван,
Чăх та кулать санран.
Автан пек критикрен
Писателе сиен.

## ЙЫТĂПА ЧĂХ

Колхозăн пулă пĕвинчен
Çу каçиччен
Хуралçă Йытă йăтрĕ пулă,
Вăл пулчĕ муллă.

Тепӗр кунне
Пӗве патне
Шур чӑх пырса ҫитет,
Ӗҫме тесе вӑл пӗшкӗнет.
Шӑп ҫакӑ вӑхӑтра
Харлатрӗ Йытӑ ҫывӑхра:
— Хӑр-хам! Хӑр-хам!
Эс вӑрӑ-ҫке, харам!
Эсех иккен
Ҫак пирӗн пӗверен
Карас пулла пӗҫертекен.
Ак лекрӗн-ха тинех.
Вӑрра ҫӳреймӗн пӗвене.
Ҫакна асту, ан ман:
Пӗрремӗш хут—штрафлап сана,
Тепре лексессӗн—хурана.

х х х

Ҫапла хӑшсем:
Хӑйсем
Вӑрлаҫҫӗ халӑх пурлӑхне,
Йӑвантараҫҫӗ теприсем ҫине.

1981 ҫулхи апрелӗн 10-мӗшӗ.

## ЧЕЕ ТИЛӖ

Сурӑхсемпе ӳсет ҫак Тилӗ.
Кунта ҫуралнӑ вӑл, кунта ун килӗ.
Каять вӑл вӑрмана. Курать ӑна Упа,
Ҫапла, тен, пулнӑ уп шӑпа.
— Эх, хаклӑ тусӑм Тилӗ,
Мана эс питӗ кирлӗ.
Пӗлетӗн эс: эп халӗ пысӑк пуҫлӑх,
Ман аллӑмра тем тӗрлӗ пурлӑх.
Мана халь кирлӗ сан пек чеесем,
Улталаме, суйма пӗлекенсем.
Хирӗҫлемерӗ Тилӗ Упана.
Ку ӗҫ, чӑнах пит килӗшрӗ ӑна.
Епле ӑста вӑл: курӑр--пӑхӑр-ха—
Йӑпӑлтатма пӗлет вӑл пуҫлӑха.
— Мана ярсамӑр сурӑхсем патне,—

Тет Тилĕ. — Илтĕп эп хуҫа ятне:
Часах унта суйлав ирттермелле...
Упа ав ирĕк пачĕ ҫак Тилле.

Суйлав та ҫитрĕ. Тилĕ — кандидат:
Пит йышлăн хăйшĕн алă пуҫтарать.
Ашак та кандидат ку суйлавра.
Ҫӳле ҫĕкленĕ хĕрлĕ ялава.
Ку кандидат та ырлăх шантарать,
Пурне те ĕҫ тупса пама пулать.
Ҫакна курсассăн чăтаймарĕ Тилĕ.
Ун ăшĕнче часах ҫĕкленчĕ ҫилĕ.
Ҫывхарчĕ хăвăрт сурăхсем патне,
Вăрҫса та тăкрĕ хыттăн вĕсене:
— Эсир мана суйламасан,
Ухмах пулатăр — чи малтан!
Нихҫан тухаймăр нушаран!
Ăс пачĕҫ ҫак Тилле ютран:
— Сурăхсене ан вăрҫ, ăнлан.
Эс Тилĕ-ҫле, хăвах чухлан.
Йăпăлтатсам эс вĕсене:
Ҫăтмах сĕнсем сурăхсене.

Ҫак сĕнĕве итлерĕ Тилĕ,
Сăмах ҫапма пуҫларĕ вирлĕ:
— Тусăмăрсем, ыр тăвансем,
Мана суйласанах — сире
Эп парăп пысăк пурлăхсем,
Тупатпăр чăн телейĕре.
Пулать кашнин ĕҫ вырăнĕ, укҫа,
Кашни туятăр хăвăра хуҫан.

Ĕненчĕҫ сурăхсем, суйларĕҫ ҫак Тилле
Хăйсем мăн пуҫлăхне.
Ҫĕкленчĕ вăл ҫӳле.
Анчах та пуҫлăх нимĕн те тумарĕ,
Сурăхсене пĕр ырлăх та памарĕ.
Шутларĕ хăй: «Ухмах ҫав сурăхсем,
Эп суйнине ĕненчĕҫ-ҫке вĕсем.
Кураççĕ малашне те нушине...
Ҫапла тăн кĕртĕп эп айвансене.
Хама валли йĕркелĕп ҫăтмахне,
Тата вăл пулĕ ҫывăх туссене».

x x x

Çак Тилĕ пек ултавлă çынсене
Нихçан ан суйлăр пуçлăх вырăнне.

## ЧУКМАР

Çурхи илемлĕ пахчара
Ӳсет Сухан, Кăшман, Ыхра —
Тата та тĕрлĕ çимĕçсем,
Кунтах ӳсеççĕ чечексем.
Çу варринче çум курăк пуснăран
Вĕсем кĕтетчĕç тяпкăна ялан.
Анчах сасартăк ешĕл пахчана
Çитсе кĕрет кĕтмен хăна.
Сулмаклă мăн Чукмар,
Çавăнтах пуçлать хыпар:
— Кунта эп килтĕм, тăвансем,
Ман хаклă тусăмсем!
Пит кирлĕ ĕçпеле,
Сире халь пулăшас ĕмĕтпеле.
Куратăр-и: мăян та хыт хура
Сире хуплать йĕри-тавра.
Ман вĕсене йăлт тасатасчĕ,
Сире ӳсмешкĕн вăй парасчĕ!»
Чукмар каланă вăхăтра
Кăлт-кăлт тĕкет те Сухана Ыхра:
— А-а, çав кирлĕ çум курăксене: — Ӳсме памаççĕ
Пире хуплаççĕ, — тет, — тĕп тутăр вĕсене!»
— Эй, пĕтертĕрех! — хавасланать Хăяр,—
Пир сыхлать патвар Чукмар!
Кĕçех Чукмар ĕçе те тытăнать:
Пĕр-рех сулать — Хăяр çеçки те татăлса ванать.
Чукмар татах ак ыткăнса илет—
Пиçенпеле пĕрлех Ыхра та сирпĕнет,
Мăкăнь çеçки те татăлса вĕçет.
Хĕрсе кайсах ĕçлет Чукмар,
Ăçта пырса лекет — йăлт таткалать чăл-пар!
Юлашкинчен аркатнă пахчаран
Вăркăнтараççĕ Чукмара. аран

x x x

Юлташăм, пуçлăха кама лартан —
Шăпу та сан нумай килет унран.

## ЛАШАПА АРЛАН

Ĕшенчĕ-тĕр лаша ĕçчен,
Витенелле вăл халь утать.
Арлан ак тухрĕ те каçчен
Хăй пĕлнĕ пек йăва тăвать.

Уя ав агроном тухать,
Тӳрех курать пĕрин ĕçне.
— Кам ӳркенмест, суха тăвать,
Пĕлесшĕн эпĕ ун ĕçне?

Арлан хăйне систерчĕ хăвăрт.
— Эп тăрмашатăп кунсерен.
Ака ĕçне пĕлетĕр: йывăр —
Эрне ĕçлерĕм тăр пĕччен.

x x x

Укçаллисем эртел ĕçне
Пуйма илеççĕ хăйсене.

## ТИЛĔПЕ ҪУШАК

Мăр-мăр сăр Кушака
Тилĕ ĕçе илет.
Ĕçе илет те çакăн пек сĕнет:
Сана шанса паратăп склад,
Унта пыл-çу та сахăр, шоколад,
Унта аш-пăш та хаклă мул,
Анчах та эс тирпейлĕ пул.
Ыйтмасăр эс ан çи, ан ил —
Илмешкĕн çимелли — ху кил.
Пĕрле ĕçсе çиер,
Пĕл, никама та ан систер,
Аш-пăш, пыл-çу пĕтсен —
Мĕн пуршăн ху тӳлен.
Часах Кушак ĕçе те тытăнать,
Директор Тилĕ хушнă пек тăвать.
Ĕçет — çиет, парать — илет,
Тилĕ патне куллен çĕклет,
Склад юлать пушах.
Килет ревизи, тĕрĕслет —
Сăр Кушакăн халь явап тытма тивет.
Чее Тилли лăх-лăх кулать —
Вăл савăнса çеç пурăнть.

## УЧЕНАЙ АГРОНОМ

Чсхи*-ре вӗренет хулара,
Ял ӗҫне чухлмасть-ҫке, ара!
Диплом пурпӗрех вӑл илет,
Яла ӗҫлемешкӗн ҫӳрет.
Бригадирпа тухать вӑл уя,
Аллине вӑл ҫӗклет пӗр туя.
Йыт-качакаран хӑрать ҫул ҫинче
Йытти те сахал мар ялсенче.
Уй тулли ҫитӗнет тырӑпул,
Урпапа пӑри те кунта пур.
Тулӑ та ешерет: пӑх та кур.
Вӑл курать: пӑри уйне пиҫен
Тапса тухнӑ — хуплать ҫиелтен.
Бригадиртан ыйтать ҫавӑнтах:
— Мӗншӗн эс тулӑ уйне мӑян
Юриех ятарласа акан?
— Курмастӑн-им, тулӑ мар вӑл — пӑри,
Пиҫене акакан та пур-и?
Айвана та акмаҫҫӗ, хӑй шӑтать,
Сан йышши те агроном пулать.
Лӑхлатса ав кулать бригадир —
Агроном намӑсланчӗ ҫак ир.
Вӑл шутларӗ: ӗҫлес хулара,
Агропромра ларас пуҫлӑхра.
Мӗн тума ман ҫӳрес уйра —
Анлӑ пӳлӗм кӗтет сулхӑнра.

x x x

Ҫакӑн пек те ӳсеҫ пуҫлӑхсем —
Тӗп ӗҫне пӗлмеҫҫӗ хӑйсем.

1990 ҫулхи кӑрлачӑн 19-мӗшӗ.

* Чсхи — Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗ (халӗ академийӗ).

## ЛАШАПА ҪАЮРА

Лаша тухать те сухана
Ĕҫлет яра кунах.
Ҫаҫхине ҫырмана
Шыв ĕҫме анать.
Ҫак самантра мĕне кура
Ҫĕре ватса тухать Ҫаюра.
Ҫак вăхăтра Асли те килсе ҫитет,
Ĕҫ ăннăшăн шутсăр хĕпĕртет.
— Нумай сухаланă-ҫке, ара!
Ĕҫӳ сан ăннă, Ҫаюра.
— Ҫапла, — тет Ҫаюра. — Тăрăшрăм пур вăйран.
Пĕччен ĕҫленипе кайрăм халтан.
— Маттур-ҫке эсĕ. Пултаран.
Ĕҫлетĕн пит аван.
Медаль те илĕн уйăхран —
Пачах ан пăшăрхан!

х х х

Моралĕ паллă каламасăрах:
Ĕҫне тăвать пĕри —
Ыр ят илтет тепри.

1990 ҫулхи кăрлачăн 5-мĕшĕ.

## УПА САНЧĂРĔ

(Юптару)

Сĕм вăрманта пурнатчĕç ирĕкре
Мулкач та кашкăр, Тилĕ те Пăши.
Пиншерччĕ-çке чĕр чунĕ,
Тĕрлĕрен.
Йăли-йĕрки пыратчĕ таçанах.
Анчах кунта та килчĕç Упасем.
Каларĕç: «Вăрмана алла илес».
Хăнтăрсене чĕнтерчĕç час вĕсем:
— Ку вăрмана картасемпе пӳлес».
Пиншерĕн ав ĕçлеççĕ хăнтăрсем,
Мăн картана час лекрĕ сĕм вăрман.
Çав картана çакланчĕç чĕр чунсем,
Кун пеккине вĕсем хальччен курман.
Каларĕ чи асли — мăнттай Упа:
— Эп ĕç паратăп кашнинех сире.
Тăрантрĕç куянсем пире пылпа,
Сĕт-çу кĕтетпĕр сарă Тилĕрен.
Çав Тилĕ илсе килĕ çăмăл тĕк:
Пире кирлех çемçе те мăн тӳшек.
Вăрман чĕр чунĕ! Халь пуçна эс пĕк.
Йăлт пулмалла эпир калана пек.

Итлесшĕн мар иккен хăш-пĕрисем.
Ак вĕсене пит хăвăрт сăнчăрларĕç.
Кала-ха эсĕ хирĕç сăмахсем —
Сана çапса йăлтах тăнран кăларĕç.
Калать ялан Упа: «Эсир кунта
Нихçан та хăвăр сассăра ан парăр.
Упа пек мĕкĕрĕр.
Вара пулать пайта.
Мулкач та Тилĕ сассине йăлт манăр!»

Çапла куллен иртеççĕ ĕмĕрсем.
Упа татмасть-ха хăйĕн сăнчăрне.
Кĕреççĕ те каяççĕ пуçлăхсем,
Анчах курмасть чĕр чун хăй ирĕкне.
Упа хăй ĕçлемест,
Выртать анчах.
Ĕçлеççĕ уншăн тĕрлĕ чĕр чунсем.
Хăй вĕсене пачах хисеплемест.
Тертленччĕр, тет, ĕмĕрех вĕсем.

## ШĂШИ

Пурте пĕлеççĕ Шăшие —
Ялан касать, ваклать.
Унтан писесшĕн кашниех:
Вăл пурлăха сиен тăвать.
Пĕр шĕвĕрскер архива
Кĕрсе тăвать йăва.
Чăнах, хайхи айван пулман,
Вăл илтнĕ Тыркасран:
Ученăй пулас тесен,
Пĕлӳлĕх çитеймесен,
Чи çăмăл май —
Ыттисене сăтăр пĕрмай.
Архивра пулнă мĕн кирли
Наян шăши валли:
Кĕнекесем, документсем,
Историлле преданисем...
Пуçа ватса нумай тăмасть,
Кĕнеке çырма шутламасть,
Ĕçе пуçлать вăл камитле —
Шăшилле.
Касать, ватать пĕр кĕнеке,
Унтан илет вуник йĕрке;
Илет, ваклать вăл теприне,
Кунтан илет вăл çуррине;
Татах ваклать ыттисене,
Кирлисене...
Юлашкинчен пурне пухать,
Йĕркелесе хурать,
Хăшпĕр çĕре хушса çырать,
Çыпăçтарать;
Çĕлет пурне пĕрлештерсе —
Çирĕплетсе.
Хуппи çине хушаматне —
Çырать ĕçĕн ятне.
Пулса та тăчĕ Диссертаци —
Шăшийĕн çĕнĕ проблемаци!
Ана Пăсарасен Советĕнче
Ятарласа пăхса та тухрĕç.

Наука! теççĕ ĕçĕнче —
Çĕн кандидат ятне те пачĕç.
Çуралчĕ ученăй Шăши —
Унран кĕрет вăрă шăрши.

Моралĕ паллă каламасăрах:
Наука ĕçне тăвасчĕ тасарах.

## УПАНА УТАР ШАНСА ПАРСАН

Пĕррехинче
Вăрман кайăкĕсен пухăвĕнче
Сăмах параççĕ ват Тилле.
Çапла вăл евитлет:
— Хурт-хăмăр ĕçĕ пит начар,
Анчах пирĕн пур утаман Упа
Мĕн кирлине вăл йăлт тупать,
Çитменнине тата
Пыла питех те юратать,
Ун вырăнĕ чăнах та утарта.

Каланă—тунă, йышăннă решени.
Упа хаваслăхпа хĕмленнĕ,
Кайри ури çине çĕкленнĕ:
Пухуранах вара
Вĕçтернĕ утара.
Ене вăл тытăннă тӳрех·
Тилле те чĕннĕ хăнана.
Сим-пыл кăларнă нӳхрепрен,
Сăйланă чысласа ăна.
Эрне те иртнĕ, уйăх та —
Ик тус ир-каçăн утарта
Пĕр чарăнмасăр ĕçнĕ-çинĕ.
Çапла часах çулталăк çитнĕ.
Сĕм вăрманти чи чаплă утартан,
Мĕскер тăвас тен — нимĕн те юлман.

Упана утар шанса парсан
Нихçан та пурлăх пулмĕ сан.

# ЙĔКĔХӲРЕПЕ АРЛАН

Йĕкехӳрепе Арлан
Шутланнă пĕр тăван.
Йĕкехӳре пурăнать кĕлетре:
Ĕçес-çиес енчен
Ун пулнă тӳперен.
Анчах Арлан сывмартан
Çӳрекелет аран.
Ун чух Йĕкехӳре
Пăрăнса çеç çӳрет.
Сывалать хайхи Арлан,
Ĕçлет-тăвать аван.
Тӳрлетет хăй пурнăçне,
Тӳпелет пурлăхне.
Йĕкехӳре пĕр ирпе
Вĕçсе çитет çил пек.
— Тăванăм, — тет, — итле:
Сиксе тухрĕ инкек.
Кĕлетри тырпула
Çисе ятăм çулла...
Парсамччĕ мана пулăшу —
Эп сана манас çук.
— Манпала ан варлан! —
Татса хучĕ Арлан.—
Эх, Йĕкехӳре,
Вĕçкĕнсе ан çӳре.
Тар юхтарса ĕçле —
Вара тупăн телей.

Йывăрлăхра çынна ан ман.
Вара чăнах эс тус-тăван.

## ХУРЛĂХАНПА ВĔЛТРЕН

Çуркуннепе Хурлăхан тĕмми çумне
Шăтать сип-симĕс çинçешке Вĕлтрен.
Вĕлтрен ӳсет лăп сулхăн хӳтлĕхре
Нимле чĕрчун та сиен кӳмест пĕрре.
Тĕрекленсе ӳсет вăл кунсерен
Çур метр яхăн ӳсет вăл эрнерен.
Çак ӳснĕ май ырлать вăл Хурлăхана,
Час-час пĕлет вăл йăпăлтатма ăна:
— Эсир, пиччен, ытла та тараватлă,
Маншăн эсĕр ылттăнран та хаклă.
Сирĕнпе пĕрле мана мĕн пек аван,
Эсир маншăн чи çывăх тус-тăван!
Эп сире нихçан та манас çук,
Тав тăвăп ĕмĕр-ĕмĕр пурăннă чух.

Ӳссе çитет, тĕрекленет Вĕлтрен,
Часах тухать хайхи çак хӳтлĕхрен.
Хуплать хурать вăл Хурлăхана,
Хевел çути те памасть ăна.
Хурлăхан унран çутă пама ыйтать,
Тепĕр чух тилмĕрсе те пăхать,
Анчах Вĕлтрен хăнк та тумасть.
Тата ытларах хупласа хурать.
— Сана çутă пама никам та килмест,
Сан çырлусене йытă та çимест,
Пĕр хускаламсăр лар эс ман айра —
Хăрса ларсан та усси çук санран!

* * *

Вĕрентекене тав тăвас вырăнне
Инкек кӳреççĕ ытларах чухне.

# ТИЛĔ

Майлашнă Тилĕ ăшă вырăна:
Пурнăç пуçланнă пыл та çу кăна!
Ĕçе чунпа нихçан та вăл туман,
Анчах пуçлăхсене пуç тайнă пит аван.
Çавăнпах та, тен,
Ăна пуçлăхсенчен
Пулăшу та, хӳтлĕх те тупăннă куллен.
Хăнана чĕннĕ чи кирлисене,
Ӳкиччен ĕçтернĕ вĕсене,
Анчах каллех чеелĕхне пула,
Мĕн кирлине тунă кула-кула,
Ĕçтернĕ аслисене: ӳстернĕ ĕç укçи,
Лайăх тунине манаймĕ-çке хуçи!
Йăпăлтатса калаçнă теприпе,
Ĕçре кирлипе.
Ыр ят та, чыс та тупнă хăй валли —
Çапла-çке унăн яланхи йăли.
Суту-илӳ пуçлăхĕнчен
Çавăн пекех чеен
Туяннă вăл Мулкачăн тăлăпне —
Ултав тăвас шутпах ыттисене.
Аслă шкулта вĕренсе пачах курман,
Анчах кунта та аптраман,
Пулса та тăнă аслă агроном!
Темле майпа çаклатнă вăл диплом,
Тӳнтер чунлă Тилĕ пек этем-тавраш
Сире ан хăвартăр ултавра.

## КРИТИК АВТАН

Ĕçе пĕлмен Автан
Илтет пĕрре таçтан:
Критик пулас тесен,
Тиркеш пĕрмай чеен.
Кала эс автора:
— Ĕçӳ пиçмен, ара...
Çӳрен сюжет тавра,
Чĕлхӳ шупка, начар,
Пĕрре те çук сăнар!
Кирек хăш çыракан
Шикленет критикран.
Хайхи мăнгтай Автан
Ĕçе пуçлать Хуртан:
«Тишкертĕм сан ĕçе —
Юлашки повеçе,
Анчах шĕвек... пиçмен,
Сюжечĕ вĕçленмен,
Геройсем пит нумай,
Сăмах çапаç пĕрмай,
Пĕри те ĕçлемест,
Ыр тĕслĕх кӳмест.
Çыр-ха çĕнĕрен:
Ыр повесть пулĕ, тен.
Унтан Шăпчăкпалан
Сăмах пуçлать Автан:
— Тусăм, итле мана,
Асра тытсам çакна:
Ăста калас тесен,
Юрла эс чĕререн.
Вĕрен-ха Куракран:
Епле юрлать аван!
Автан сăмахĕ Шăпчăка
Витеймерĕ вăл пачах.
Хитре юрлать Тăри,
Таçтан янрать юрри.
Çитсе тухать Автан,

Кулма пуçлать унтан:
«Ан тăрăлтат, айван,

* * *

Чăх та кулать санран».
Автан пек критикрен
Писателе сиен.

## КĔСКЕ ЮПТАРУСЕМ, ПАРОДИСЕМ

### КАЛТА

Чĕлхи ун вăрăм та малта,
Элек памашкăн пит ăста,
Усал чĕрчун — Калта.
Лапра чĕлхи кама тивет,
Çавна вăл пылчăкпа витет.

Калтанне мар, элекçĕнне
Татасчĕ пӳтсĕр чĕлхине.

### ТĂРНА

Хурать вăл каçăртса пуçне,
Утат, пăхмасть никам çине.
Хăйне шутлать вăл чи ăсли,
Кайăксенчен чи усалли —
Хайхи Тăрна-пăсли.

Тăрна пек сĕм пуçтахсенчен
Ялан кулар вар хытиччен.

### ЕÇЧЕН АРЛАН

Ĕçчен тесе лартаççĕ Арлана
Пуçлăх пулмашкăн вăрмана.
Виç çул иртмест—хура вăрман
Çаралса пырать унтан-кунтан.
Пурте ăнланчĕç: вăл — ĕçчен
Халăх мулне ишме пĕччен.

## ХАМ ПӖҪЕРНӖ ҪӐКӐР

Эх, анне, ҫӑкӑр пӗҫертӗм,
Мӗн пек ырӑ ун шӑрши!
Савӑнса сана пӗлтертӗм,
Тутанса ху пӑхмӑн-ши?

Ҫӑкӑр-ҫӑкӑр, манӑн ҫӑкӑр,
Хӑмӑр, сарӑ, кӑмӑшка.
Чӑтаймасӑр ҫисе пӑхӑр:
Кӑмӑллать ман упӑшка.

Малашне текех чупмастӑп
Ҫӑкӑршӑн магазина.
Кукӑльшӑн та эп тӑмастӑп —
Пултӑр вӑл урӑх ҫынна.

Хушса юрламалли:

Тӑвансене эп пухатӑп
Савӑнмашкӑн ман ӗҫпе.
Вӗсене хӑна тӑватӑп

Хам пӗҫернӗ ҫӑкӑрпа.
кӑрлачӑн 20-мӗшӗ.
Шупашкар.

## ЛАР, АННЕҪӖМ, ЮНАШАР

(Пароди)

Мӗн пек ырӑ эс, аннеҫӗм,
Ытарма ҫук сан чунна.
Хулара эп пурӑннӑҫемӗн
Пит хаклас килет сана.

Хушса юрламалли:

Лар, аннеҫӗм, юнашар,
Шутсӑр лайӑх юмахлар,
Эс ӳстернӗ ывӑл-хӗрӗн
Укҫи-тенки нумай мар,
Санран пулӑшу ыйтар.
Сана курма каллех эп килтӗм,

Эсĕ маншăн ылтăн пек.
Сан валли тип пулă илтĕм,
Парнелетĕп сар чечек.

Арăма валли ман кирлĕ
Сахалран та утмăл пин.
Сăмахлар-ха эпир мирлĕ:
Саншăн та вăл хаклă кин.

Ĕнепе лаçа сутар та
Шăпах çитĕ кирлĕ сум.
Енчĕк уçса пăхар та —
Хам туянăп çĕнĕ тум.

Эс ăнлан-ха, ват аннеçĕм,
Нумай кирлĕ мар сана.
Манăн пурччĕ лайăх ĕçĕм —
Ĕçсĕр юлтăм, тăмана.

Сыснасем сан кĕмĕл саслăн
Янратаççĕ ирсерен.
Мăнуксем валли парсассăн —
Тав тăватпăр чĕререн.

Самăркка хурсем çӳреççĕ
Санăн ăшă картара.
Ман куçа пит илĕртеççĕ —
Пире памăн-ши ара?

Эс илетĕн пенси халĕ —
Пурăнатăн мăй таран.
Ман кил-йыш сана ыр калĕ
Эс ăна пире парсан.

Шупашкар, 1992 çулхи
раштавăн 5-мĕшĕ.

## ÇĔНĔ ÇУЛ ТАКМАКĔСЕМ

Нăриклетсе Çĕн çул та çитрĕ,
Сыснан çĕн çулĕ халь умра.
Çĕре шап-шурă чатăр витрĕ,
Иртни вăл юлчĕ асăмра.

Сысна пире мĕн илсе килчĕ?
Савăнтарать-ши халăха?
Çӳлте çав пуçлăхах ав юлчĕ—
Курмастăп янкăр уçлăха.

Демократсем пире шантарчĕç
Ыр пурăнăç туса пама.
Турра та çĕр çине антарчĕç
Телейлĕ кашнине тума.

Пур халăха та ирĕк сĕнчĕç:
Илсе-мĕн суверенитет.
Ав чеченсем ăна илейрĕç,
Мĕн чухлĕ çын уншăн пĕтет.

Тавар хакне упратпăр терĕç
Халăхсене тупа туса.
Кашни çулах çĕр хут ӳстерчĕç
Те халăхран юри кулса.

Магазина илме кĕретĕн
Хăвна валли мĕн кирлине.
Хакне курсан шалт тĕлĕнетĕн—
Нимсĕр утатăн кил енне.

Çĕн пуçлăхсем коттедж лартаççĕ—
Виç хутлă хӳхĕм мăн кермен.
Сана ун пек тума памаççĕ —
Çурт-йĕр тумашкăн ан хĕмлен.

Коммерсантсем пуйса пыраççĕ —
Вĕр-çĕн машинăсем кашнин.
Эс ыйтсан çывăха ямаççĕ:
Пĕр хăйсене шутлаççĕ çын.

Хваттерӳнтен тухса каятӑн,
Ҫӳретӗн ӗҫӳпе кӑштах,
Вара калла эс таврӑнатӑн —
«Тасатнӑ» вӑрӑсем йӑлтах.

Ҫӗрле эс урампа пыратӑн:
Ҫулна ак ҫамрӑксем пӳлеҫ.
Эс укҫуна йӑлтах паратӑн —
Сана пурӗ пӗр вӗсем хӗнеҫ.

Мӗн-ма мухтар мар халӗ пирӗн
Ыр пурнӑҫшӑн пуҫлӑхсене.
Ҫӗн ҫул ячпе калар-ха вирлӗ
Мӗн пур ултавҫӑ ушкӑнне.

1994 ҫулхи раштавӑн 20-мӗшӗ.

# Тĕрлĕ çулхи сăвăсем

## ТĔЛЕНТЕРМĔШ СУНАРÇĂ

Кĕрхи вăрман сап-сарă тумлă.
Чуна вăл канăçлăх кӳрет.
Темле этем сунарçă тумлă
Вăл уçăлса кунта çӳрет.

Ӳпке тулли сывлать уç сывлăш,
Канать вăл, савăнать чунтан.
Йĕри-тавра ӳсет хыр-чăрăш
Тӳлек те лăпкă вырăнта.

Çитсе тухать — умра уçланкă.
Курах каять пĕр çапăçу:
Куян çине чăмать шаланкă,
Леш ача пек йĕрет: ăу!

Ку çынăн чăтăмлăх çухалчĕ:
Вăл курайманĕ тăшмана,
Тĕллерĕ те — персе те ячĕ,
Шăпах лектерчĕ çăткăна.

Куян час туйрĕ: иртрĕ хăрушлăх:
Вăл чăтлăха çил пек вĕçет,
Хайхи этем кулса çеç ăшшăн
Хавтесĕре ыр кун сĕнет.

Çав самантра тухать сунарçă:
— Мĕн-ма вĕçертрĕн куяна?—
Васкар часрах эпир ун хыççăн!—
Хистет, чĕнет хайхи çынна.

— Çук! Мĕскĕне эп хӳтĕлетĕп —
Çапла ман ĕмĕрхи йăла,
Тискерсене пĕрмай хиретĕп,
Сирĕншĕн ку пулĕ кулăшла?!

х х х

Нумай кунсем хушши çӳренĕ
Хайхи сунарçă шухăшра:
Мĕнле этем кун пек хĕрхеннĕ
Çак куяна мĕнпур чунтан?

Пĕррехинче хаçатра курнă
Хайхи этем сăнӳкерчĕкне.
Тĕлĕннипе вун хут вуланă:
«В. И. Ленин» тенĕ ун ятне.

Шупашкар,
1997 çулхи пушăн 10-мĕшĕ.

## САМАХ ХĂВАТЕНЧЕН

### ШАРАТНА ПАЛĂК

(Пушкин çурални 200 çул тултарнă ятпа)

Санран патша хăранă ахаль-мар-тăр,
Сăвву чĕтретнĕ унăн тӳррине.
Алăпа туман çап-çутă палăк лартрăн
Питле-питле чуралăх никĕсне.

Сăмах хăватĕнчен шăратнă палăк
Çунать сӳнмесĕр çутă хĕвелле.
Эсĕ ирĕке чĕнсе юрланă халăх
Ирĕкре пурăнчĕ, халь нушара каллех!

Чарусăр вăхăт. Ĕмĕрсем те иртĕç.
Çĕршер поэт çуралĕç çĕнĕрен.
Сан палăкăн çути унта та çитĕ,
Хавас кӳрсе пурне те чĕререн.

Шупашкар,
1997 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

## ЁМЕТЁМ, ÇУНАТЛĂ ЭСĔ

Ĕмĕтĕм, çунатлă эсĕ,
Çиçĕм евĕрлĕ вĕçен,
Çепĕç юрă пек илемлĕ
Чунăма вăй-хал кÿрен.

Ĕмĕтĕм, телейлĕ эсĕ:
Çут пуласлăха куран.
Кашниех унта вĕçеççĕ
Сан çунат çинче пулсан.

Ĕмĕтпе эпир пурнатпăр
Çакă çутă тĕнчере,
Ĕмĕтпе тĕллев тупатпăр
Пурнăçра, мĕнпур ĕçре.

## ÇĔН ÇУЛ САВВИ

Çил ачисем чупса иртеççĕ
Пÿрт çумĕпе, пÿрт çийĕпе.
Тавралăхра — Çĕн çул сипечĕ,
Раштав пилленĕ шур кĕпе.

Анчах кĕпе-ши? Çук, ялав ку!
Çĕн çул ялавĕ вĕл те вĕл.
Ырра шантаракан уяв пек
Ялтравлă та мухтавлă хĕл!..

...Çĕн çул! Сана тухса кĕтетпĕр
Алăксене яри! уçса.
Сана эпир киле кĕртетпĕр —
Хавасланса, пуçа тайса.

12.12.97 ç.

## ПУРПĔР, ЧУНĂМ. ЮРЛА

Çĕршывăма вăр-хурахсем килсессĕн,
Эпир кар! тухнă аслă вăрçăна.
Эп кĕрешрĕм чăваш ятне çĕртмесĕр —
Вăй пур таран аркатрăм тăшмана.

Окоп шывпа та лапрапа тулатчĕ,
Каймастчĕ ал гашетка çумĕнчен.
Умра çиçетчĕ пысăк ĕмĕт-шанчăк,
Юн талпăнса чупатчĕ хулсенче.

Йĕпе-сапа е кĕрт, сив çил... Кăç-ирĕн
Тăманлă вутлă çумăр пуç çинче...
Пуçа пĕкмерĕм, пултăм харсăр, çирĕп
Мухтавлă Ленинград таврашĕнче.

Çав йывăр кунсенче çуралнă тӳсĕм,
Çĕнтерӳпе хастарлăх кунсерен
Мана ялан тумашкăн çĕнĕ ӳсĕм,
Хăват параççĕ пурнăçра, ĕçре.

Шупашкар,
1959 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕ.

## АСРА ТЫТМАШКĂН СТУДЕНТА

Вĕрен, ĕçле, тӳр чунлă пул,
Вĕренӳре кая ан юл,
Йывăрлăхра çынна ан ман —
Вĕрент те пулăш эс ялан.

Мĕн пĕлнипе эс ан çырлах,
Вĕренӳре çĕклен татах:
Вула, ăнлан та шухăшла —
Наука тĕшшине кăшла.

Чи кирлине пуçра хăвар,
Ялан вăл тăтăр шĕл кăвар,
Ĕçре вăл патăр вăй-хăват,
Санра çĕклетĕр ырă ят.

Ăс-тăн ыйтсан, пул тарават,
Кӳрентерсе çынна ан ват.
Итле, вĕрен эс пуринчен,
Писсе ан тăр ваттисенчен.

Вӗренсе тухса ӗҫе кайсан,
Юлташсене пӗрех ан ман:

Пуҫна ҫӗклесе ан ҫӳре —
Пултарулла пул ӗҫре.
Ачасене вӗрент, юрат,
Ҫут пурнӑҫ ҫул ҫине тӑрат,

Ху черерӳ вут-ҫулӑма
Поэтла хӗрӳллӗ туйӑма
Пулас ӑрушӑн ан хӗрхен —
Вара чӑн пулӑн вӗрентекен!

## ЮЛТӐН ЭС АСРА

(С. П. Горский профессора асӑнса)

Эп юнлӑ вӑрҫӑ хирӗнчен килсеччӗ
Сан пата, ман хаклӑ юбиляр!
Ман ҫире ун чух фронтри шинелччӗ·
Ӑшра ҫунатчӗ ӗмӗт, вут-кӑвар.

Мана ун чух эсир кӗтсе илейӗр,
Ӑс парса каларӑр атте пек:
«Ӑсчах пулас тесен пит хытӑ тӗпчӗр,
Наука тени вӑл йывӑр та — тӗрек».

Сире ӑнлантӑм ун чухне эп, каччӑ:
Ман умра, чӑнах та, чӑнкӑ ту:
Ун ҫине ухмашкӑн ӑс хӑвачӗ
Кунсерен пухас пулать — асту!

Майпен ҫӗклентӗм. Утӑм пулчӗ йывӑр,
Ман пекех тӑрмашрӗҫ юлташсем.
Пире ӳсме эсир тупса хӑвартӑр —
Нимрен ытла ӑш, ырӑ сӑмахсем.

Ху вӗрентнӗ усал ҫынсем те пулчӗҫ,
Сана ӗҫрен сирчӗҫ тӑшмансем.
Ҫырулӑхра нумай вӗсем пӑтратрӗҫ,
Вӗсем хыҫҫӑн каяймӗ чӑн этем.

## ЧЁЛЁМ АН ТУРТ-ХА ЭС, АЧАМ!

Ванюк тухать сарай хыçне
Шкула кайман чухне.
Кесъене чикнĕ спичкине,
Алра вăл — пирусне.

Улах çĕре тăрать часах,
Çутать вăл шарпăкне,
Пирус хыпать ак васкасах,
Чĕртет вăл ун пуçне.

Туртать вăл вăрттăн савăнса,
Никам курмасть тесе.
Кăвак тĕтĕмпе чыхăнса
Каять ак чĕтресе.

Амăш тухать шăп ун патне,
Курать: Ванюк туртать.
Тарăхнипе вал ун ятне
Калаймасть — çупать!

— Мĕншĕн туртатăн-ха, ачам,
Пушар тăвасшăн-им?
Татах туртнине эп курам —
Патак çиесшĕн-им?!

Аçу та вĕçсĕрех туртать —
Сывлама çук пӳртре.
Аран сывлать, юнлă сурать —
Табак тĕтĕмĕ — ӳтре.

Мĕн пек сиен кӳрет çынна
Наркăмашлă табак.
Пачах туртма хушмас сана —
Мĕн чуль унпа тăкак!

Ун тĕтĕмĕ вилĕм кӳрет.
Курмастăн-и аçуна?
Аран-аран вăл çӳрет,
Вилет, тет, пуçана.

Эс куратăн — вăл вилет,
Юлатăн тăлăхах.

Патвар çынна та вăл илет —
Пăхса тăмасть пачах.

Илсе каять вăл вăхăтсăр
Пиншер-пиншер çынна.
Туртакан мĕншĕн ăнлавсăр:
Сисмест-ши тăшмана?!
Табак ан турт-ха эс, ачам:

Майĕпен вĕлерекен тăшман.
Çакна чунупа ăнлансам —
Вара нумай пурнан.

## ШУХĂШСЕМ

Шухăшсем, мана хевтелĕх парăр,
Ан пултăр канăç хĕмлĕ чĕрене...
Мана нихçан та хăвăртан ямарăр,
Вĕçме май патăр ман çунатсене.

Эсир мана çӳле-çӳле çĕклерĕр
Вĕçсе çитме нумай вырăнсене.
Аш кăнтăра е çурçĕре çитертĕр,
Эп куртăм тĕрлĕрен халăхсене.

Шухăшсем, эсир мана вĕçтертĕр
Илемлĕ те киревсĕр тĕнчере...
Хавхалану парса тек ĕçлеттертĕр,
Анчах мана шав хĕсрĕç пичетре.

Анчах та эсĕр чарăнма памарăр,
Ялан мана хистерĕр пурăнма.
Чăнах та, ватăлма чарса тăратăр
Çĕн вăй парса хĕрӳллĕ чунăма.

Чĕрем ман чарăнĕ...
Эсир ниçта та пĕр чарăнмасăр,
Пĕрмай вĕçĕр çĕршывăм çийĕнче,
Ыр çынсене ыр çимĕçпе хăналăр
Хĕрӳлĕх кĕртсе вĕсен чĕрисенче!

## КӐМӐЛ-ТУЙӐМ САВВИСЕМ

## СӐНМЕН-ХА ЮРАТУ ХĔЛХЕМĔ

Юратăвăм ман ялкăшма пултарĕ,
Чĕремре вăл халь сӳнсех çитмен.
Анчах унăн ялкăшан кăварĕ
Кăвак кĕлпе хупланчĕ çиелтен.

Хутран-ситрен ăшă çил вĕрсессĕн
Кĕле сирсе вĕлкĕшкелет хĕлхем.
Ана çунмалăх кăмрăкĕ пĕтсессĕн —
Чĕртеймĕç урăх кăнтăрхи çилсем.

Çĕр çухрăм хушă уйăрать пире —
Хальхи машинăшăн пĕр сехет кăна.
Сӳнсе ларман-ши çулăм чĕрере?
Тен, саншăн пулăп эп чĕнмен хăна.

Кунсем иртсен, каллех аса илетĕп,
Хускатса лăпланнă чунăма.
Эсир маннине эпĕ сĕмленетĕп,
Тем пек тăрăшатăп сирс ăнланма.

Вĕри туйăм чĕрере пĕтмен-ха,
Хутран-ситрен илет вăл йăлкăшса.
Сив шыв сапсан та, пурпĕрех сӳнмен-ха,
Хаваслă çил тухинччĕ вăркăшса.

Хĕрлĕ Чутай,
1993 çулхи раштавăн 25-мĕшĕ.

## МАЙ ÇУК-ÇКЕ САНСĂР ПУРАНМА

Эс ютшăнан мана курсан.
Сăмах чĕнмесĕр эс иртетĕн.
Эс пĕлместĕн: ман чунра
Çепĕç туйăм эс чĕртетĕн.

Мĕншĕн тĕл пултăм-ши сана
Çав каç ялти çурхи клубра?
Пĕр систермесĕр ман чуна
Пуçларăн çунтарма вутра.

Сирень пек кăн-кăвак куçу
Ялан-ялан ман асăмра.
Сар йĕтĕн пек кăтра çӳçӳ
Чечек пек курăнан умра.

Шур хурăн евĕр кĕлеткӳ
Куç шăршинех юлать ларса.
Çамка çинчи кăтра çӳçӳ
Тăрать пĕр çилсĕр хумханса.

Кашни илемлĕ хускану
Питех каять ман кăмăла.
Чуну ыйтсассăн йăпану —
Ачаш çĕртен çеç йăвала.

Епле эс çупăрлан мана
Туртса илсе шух чунăма.
Аçтан-ха манăп эп сана —
Май çук-çке сансăр пурăнма.

## ХУЛАРИ ЧĂВАШСЕМШĔН ХУЙХĂРСА ШУХĂШЛАНИ

Чăваш, чăваш!
Мĕншĕн манатăн
Хăвăн чĕлхÿне?
Мĕншĕн эс вырăсланатăн
Манса чăваш йăхне?
Ачусем чăвашла пĕлмеççĕ —
Çухатнă чăвашлăха.
Санпала вырăсла пуплеççĕ —
Пăхаççĕ урăхла.
Санпа пурнаççĕ, ютшăнаççĕ:
«Эс пĕчĕк халăхран».
Хăйсене вĕсем шутлаççĕ
«Аслă халăхран».
Эс хăвах пĕтерсе пыратăн
Мухтавлă пăлхар йăхне.
Намăса ăçта хуратăн
Çитсен турă умне?

1882 çулхи
çурла уйăхĕн 12-мĕшĕ.

## МАН ТАНТĂШĂМ ВИЛМЕН...

Ман тантăшăм — кăвак чултан,
Автоматне алăран яман,
Çунтарнă сĕмсĕр тăшмана,
Пĕрре те хĕрхенмен ăна:
Хĕрхенме кирлĕ пулман —
Пире те шеллесе тăман.
Ман юлташ каялла чакман
Çак вырăнтан.

Халь вăл мрамортан...
Сылтăм аллине тăснă анăça,
Çапăçура пĕлмен вăл канăça.
Хастар кĕрешнĕ вилĕмсĕр этем,
Чылай выртнă таврара фрицсем —
Вăл çулăм сапнă окопран,
Пĕччен юлсан та парăнман.

Танк килнĕ ăнсăртран,
Анчах юлташăм пытанса тăман,
Граната тытнă та алне
Вăл чупнă танк енне.

Çук, тусăм, тантăшăм вилмен —
Вăл мрамортан каллех çĕкленчĕ.
Кирек хăçан та умĕнчен иртен —
Пуçа тайма, чечек хума ан манччĕ,
Вăл паттăррăн, хăюллăн çапăçса
Сан телее, пуласлăха сыхларĕ.

## ÇАМРĂКЛĂХ УЯВĔ

Уява эпир тухатпăр
Ушкăнпа паян пĕрле.
Ялава йăтса пыратпăр
Çĕклесе çӳлтен çӳле.
Вĕлкĕш-вĕлкĕш мир ялавĕ
Ăшă кăмăллă çилпе.
Пирĕн çамрăклăх уявĕ
Тулнă çутă телейпе.
Аслă парти панă ырлăх
Пире чыслăн ӳстерет.
Çавăнпа эпир хастарлă,
Çавăнпа вăй-хал вĕрет!

## ПИРĔН ПИКЕСЕМ

Куçĕсем савăнса йăл кулаççĕ,
Хускатса юрату хĕлхемне.
Сар кăтра çӳçĕсем явăнаççĕ,
Пĕр курсан, манас çук ĕмĕрне.

Ай хитре-çке пирĕн пикесем,
Ĕçре пиçнĕ маттур сар хĕрсем.

Каласса кулнă чух шăпчăк тейĕн,
Утнă чух чăн-чăн акăш утти,
Kaçхине вĕсене уйăх тейĕн,
Кăнтăрла — сар хĕвелĕн çути.

Ах хитре-çке пирĕн пикесем,
Ĕçре пиçнĕ маттур сар хĕрсем.
Паллашсан, туслашаççĕ яланлăх,
Юратсан, юратаç ĕмĕрне.
Манма çук ырă чунлă, сăпайлă,
Вут чĕреллĕ маттур хĕрсене.

Ай хитре-çке пирĕн пикесем,
Ĕçре пиçнĕ маттур сар хĕрсем.

Ĕçлеме тытăнсан — вут тăкаççĕ,
Хĕлхемне сапалаççĕ таçтах.
Пурнăçа ешĕл сад пек тăвасшăн
Кĕрешеççĕ хĕрӳллĕн, чунтан.

Ай хитре-çке пирĕн пикесем,
Ĕçре пиçнĕ маттур сар хĕрсем.

## ЭС ТЕЛЕЙ КӲРЕН ЧЕЧЕК

Хĕл каçипех ĕмĕтленсе упрарăм
Çепĕç те илемлĕ сăмахсем...
Тĕл пулма сахал мар эп шырарăм
Вăрттăн та хаваслă ыр каçсем.
Эс пĕлесчĕ: пĕрре мар шутларăм
Сан çинчен, савниçĕм, сан çинчен.
Ĕмĕтре сана савса юратрăм —
Анчах эп пултăм сансăрах пĕччен.
Чĕреме илемлĕх, ырлăх кӳтĕн —
Поэзипе тултартăн чунăма.
Ĕмĕтĕме çунат хушса ӳстертĕн —
Пер çавăншăннах телейлĕ пурăнма.
Ак паян ытарайми тавралăх:
Çĕмĕртсем шап-шурă чечекре.
Пĕр хутчен хуть мана асăнмалăх
Сада тухсамччĕ кĕçĕр çиччĕре.
Эп сана çут çăлтăр пек кĕтетĕп,
Кĕтетĕп эп хĕвелĕн шевли пек.
Чунтанах сана ĕненетĕп:
Маншăнах эс телей кӳрен чечек.

Шупашкар, 1965 çулхи
çу уйăхĕн 25-мĕшĕ.

## ЧӖРЕМЕ ХӖЛХЕМ ЭС ЯТӐН

Колхоз хирӗнче сана эп куртӑм
Хӗвеллӗ, ӑшӑ кӗркунне.
Сисмесӗрех магнитлӑ туртӑм
Илсе ҫитерчӗ сан енне.

Ырми-канми эсӗ ӗҫлеттӗн,
Пухаттӑн шурӑ ҫӗр улми.
Аллусемпе чавса илеттӗн,
Пуҫтаратӑн ним юлми.

Ак сан пата ҫитсе эп тухрӑм —
Эс ӑшшӑн пӑхрӑн ман ҫине.
Пит илӗртӳллӗ те хавассӑн
Кулса калаҫрӑн ун чухне.

Кӑтра ҫӳҫӳ хум пек вылярӗ
Эс пӗшкӗнсе ӗҫленӗ май.
Ҫырла туту ӑшшӑн кулайрӗ,
Питӳ ҫинче — хӗвеллӗ май.

Вут чӗреме хӗлхем эс сапрӑн,
Ҫӗклерӗн манӑн туйӑма.
Санпа эп канӑҫлӑх ҫухатрӑм,
Вырнаҫрӑн эсӗ чунӑма.

Шупашкар районӗ,
«Хӗрлӗ флот» колхоз,
1961 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 18-мӗшӗ.

## ТУНСӐХЛАТӐП

Каҫхине урама эп тухатӑп
Е кӗретӗп ҫырла пахчине —
Эс ҫуккишӗн ялта тунсӑхлатӑп,
Маӊ курасчӗ сана каҫхине.

Ӗҫлеме хулана эп каятӑп,
Е юлатӑп тӑван колхозра —
Эс ҫуккишӗн пӗрмай тунсӑхлатӑп:
Эс ялан, эс ялан асӑмра.

Сассуна эфирта эп илтетĕп,
Хаçатра эп вулап сан çинчен.
Эс ăçта пулнине йăлт пĕлетĕп:
Кăмăлласа сана чĕререн.

Лăпкă каç урама эп тухатăп,
Тĕл пулмастăп сана керменре.
Эс çуккишĕн каллех тунсăхлатăп —
Хуть килсеммчĕ яла эрнере.

## АСĂМРА, ЧУНАМРА ЭСĔ ЮЛТĂН

Пӳлĕме çиçĕм пек çиçсе кĕтĕн,
Асăмра çутă йĕр хăварса.
Эп ун чух çулăмпа хыпса илтĕм,
Туйăма ăшăмра пытарса.

Ăнланмарăн мана: эпĕ çунтăм
Пĕр сана çеç курасшăн кунта.
Çук-пур пек сăмахсем эп шырарăм
Санпала калаçасшăн чунтан.

Сăмахсем, сăмахсем манăн чухăн,
Тухаймарĕç ун чух ăшăмран.
Уншăнах эс мана айăп тумăн,
Туйăма чĕрепе ăнлансан.

Ман çине эс пăхса ăшшăн култăн.
Чĕреме те хускатрăн хĕмпе.
Çавăнпах асăмра эсĕ юлтăн
Тӳпери Шурăм пуç çăлтăр пек.

## ЯЛАНАХ КУРАС КИЛЕТ САНА

Нихçан манмастăп: епле ырă кунччĕ,
Сар хĕвел кулатчĕ ялкăшса.
Кĕрхи вăрман сар кĕрен курнатчĕ,
Шăна карри вĕçетчĕ карăнса.

Çамрăксем çĕр улми пухатчĕç,
Пухаттăн эс те хăвăрт, васкаса.
Кайăксем кăнтăр енне каятчĕç,
Куçупа яраттăн ăсатса.

Çавăн чух сана эп асăрхарăм,
Чунăма эс илтĕн тыткăна.
Çав кунран канăçа çухатрăм:
Чĕрене эс кĕтĕн ыткăнса.

Пĕр хутчен сана эп куртăм,
Курас килет ман яланах сана.
Тĕл пулсан питех хумханатăп,
Пуплеме чĕнетĕп кинона.

Эп сана тилмĕрсе ыйтатăп,
Клуба пырсамччĕ ыран каçхине.
Эп сана чĕререн саватăп,
Санпа куратăп пурнăç шăпине.

Шупашкар,
1961 çулхи юпан 7-мĕшĕ.

## ПĔРРЕ КУРСАХ САНА УН ЧУХ ЮРАТРĂМ

Сана илемлĕ хĕр чухне курсаттăм:
Пиçсе çитнĕ хăмла çырлиех.
Ирхи хĕвел пек ăшшăн йăл култăн,
Шап-шур чечек пек кĕпеччĕ çире.
Хула çулпе акăшла утаттăн
Çăмăллăн та кăмăллăн пусса.
Çемçен те лăпкăн эсĕ юмахлаттăн
Кашни сăмахне сар çупа çуса.
Чи çепĕç сăмахсемпе пуплеттĕн,
Çӳп-çап сăмах тухман çăварунтан.
Пуплеве чĕкеç пек кĕвĕлеттĕн,
Итлеме те хӳхĕмччĕ чунтан.
Санпа чылай улăхра çӳренĕ,
Вăрмана та çитнĕччĕ хавас.
Эс мана, тен, ун чухне кӳреннĕ —
Айван пулнине мĕншĕн асăнас.
Пĕрре курсах сана ун чух юратрăм,
Йăлкăшаттăн роза пек хитре.
Çурхи хĕвел пек ăшăтса çутатрăн —
Сана халь те упратăп чĕрере.
Таста пулсан та — чĕререн тухмастăн,
Пытарма ман вăйăм-халăм çук.

Ăна, паллах, пĕлместĕн, чухламастăн —
Ман пирки пулман, тен, шухăшу.
Сана юратнă — эпĕ пытармастăп,
Сана курасшăн çуннă пĕрре мар.
Нумай çулсем сана пачах курмастăп —
Кăçал курмашкăн шутсăр тăрăшар!

1993 çулхи юпан 5-мĕшĕ.

**Анютăна сума суса.**

## САНА ИНÇЕ ÇУЛА АСАТРĂМ

Пĕрре курсах сана юратрăм —
Çавра пит-куçлă сар хĕре.
Ман чĕрере вăй-хал вăратрăн,
Тăраттăн эсĕ фойере.

Куçсем сан çăлтăрла çиçетчĕç —
Кăвак та кăмăллă вĕсем.
Туту сан çырла пек хитреччĕ:
Кĕрен те, пĕчĕк те илем.

Сассу сан çепĕç те йăвашчĕ,
Чĕвĕлтететтĕн чĕкеçле.
Ăш сăмахсем ăшран тухатчĕç —
Лăпкатчĕç чунăма вĕсем.

Вăр-вар кăна эс çаврăнаттăн,
Утаттăн ут пек ярăнса.
Пĕр-пĕр ĕçе ярса тытаттăн —
Тăваттăн хăвăрт савăнса.

Пĕрре курсах сана юратрăм,
Манми юратрăм чĕререн.
Сана инçе çула ăсатрăм,
Тăрса эп юлтăм тăр пĕччен.

1972 çулхи утă уйăхĕн 8-мĕшĕ.

Сана савса эп çĕнĕ пӳрт тутартăм,
Кастартăм эпĕ çирĕм чӳрече.
Вите, лупас, кĕлет, мунча та лартрăм —
Мĕн пек хаваслă маншăн çут тĕнче.

Анчах эс мĕншĕн тĕл пулма тухмастăн?
Мĕнле сăлтав — пĕлесшĕнччĕ çавна.
Мана, тен, эсĕ пачах юратмастăн —
Пĕр пытармасăр эс пĕлтер мана.

Текех эп саншăн чĕрене çунтармăп,
Ĕненмĕп урăх сан пек хĕрсене.
Çĕн юратуран пур пĕрех эп тармăп —
Тен, эп тĕл пулăп чăн юратнине.

Атĕлкасси,
1993 çулхи юпан 10 мĕшĕ.

## ТЕЛЕЙ ХĔВЕЛĔ ХĂÇАН АШШĂН КУЛĔ?

Çапла чĕкеçĕм, миçе çул курмарăм,
Курас ĕмĕт ман пулнă яланах.
Курман пулсан та—эп сана манмарăм—
Упрарăм чĕрере чипер сăнна.
Сана курмасăр вăтăр çул çӳрерĕм,
Вĕсем ăсанчĕç сив çил пек вĕçсе.
Сана курма нумай çĕре кĕрейрĕм —
Тĕл пулаймасăр тухнă эп çиçсе.
Пĕрре çулла санпа эп тĕл пулсаттăм,
Эс ман умра тăраттăн вăтанса.
Эс вĕренесси çинчен пит сăмахлаттăн,
Самант-самант илеттĕн пăлханса.
Сан умăнта мăн институт курнатчĕ —
Куçна илместĕн эсĕ ун çинчен.
Ăс-тăн тĕнчи сана тек йыхăратчĕ —
Ун алăкне уçасшăнччĕ пĕччен.
Эс тăрăшни харама каймарĕ,
Уçса кĕтĕн наука тĕнчине.
Сан аллунтан кĕнекесем каймарĕç,
Пыл пек пухайрăн ăс-тăн çимĕçне.
Аван вĕрентĕн, педагог та пултăн,
Учитель ĕçĕ килĕшрĕ сана.

Ачасене ăс-тăн парасшăн çунтăн,
Вĕсемшĕн шеллемерĕн вăй-хална.
Тумхахлă пулчĕ санăн пурнăç çулĕ,
Пĕрре çеç-и сиктерчĕ вăл сана.
Телей хĕвелĕ хăçан ăшшăн кулĕ?—
Ялан-ялан кĕтеттĕн эс ăна.

Шупашкар, 1993 çулхи юпан 30-мĕшĕ.

## ЧУНРА ЭС ЧĔРТРĔН ÇĔНĔ ТУЙĂМ

Сап-сар илемлĕччĕ тĕнче,
Ирхи хĕвел ăшшăн кулатчĕ.
Колхозăн анлă хирĕнче
Улма пухма йышпа тухсаччĕ.

Сана тĕл пултăм ăнсăртран —
Эс тăрăшсах улма пухаттăн,
Тен, ун чух васканăран
Сăмахсене кĕскен калаттăн.

Çемçен кулса пупленĕрен
Чунра эс чĕртрĕн çепĕç туйăм.
Эс хастарланса ĕçленĕрен —
Манра çĕкленчĕ çĕнĕ çулăм.

Татах курасчĕ, сăмахласчĕ
Чĕремçĕм хавхаланнă май.
Сапран килет: ырра шанасчĕ —
Пуплес килет ман пит нумай.

Кăмăлу пулсан, эс систерсемччĕ,
Анланччĕ шухă чĕреме.
Хивре пулсан, хурав кĕтетĕп —
Сӳнме памасăр хĕлхеме.

Шупашкар районĕ, «Хĕрлĕ флот» колхоз,
студентсемпе (кунта Гурий Чаржов поэт та пурччĕ) çĕр улми пухнă чух. 1961 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕ.

## ПУРНĂÇ УРАПИ

Пурнăçра пурăнма пĕлмелле,
Вăхăта ĕçпеле çĕнмелле.
Ĕмĕр вăрăм тесе ан шутла —
Пурнăçа васкаса ан чутла.
Ĕç пулсан, ĕçлеме ан ÿркен:
Япăх пурнăç тесе ан тирке.
Эс ĕçрен пăрăнса çÿресен,
Хăтăлса çитес çук инкекрен.
Тăрăшсан, пурнăçу йăл кулать,
Мĕн кирли пĕтĕмпех вăл пулать.
Пурнăçа пурăнма пĕлмелле —
Йывăра ĕçпеле çĕнмелле.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ЭЛЧЕЛĔ

Сан пурнăçу кал-кал пулмарĕ,
Çăмăл пулмарĕ сан шăпу
Кам хĕсмерĕ, таптамарĕ —
Мĕнле тухмарĕ-ши чуну?
Сана хĕçпе те таткаларĕç
Чинхизхан нукерĕсем,
Сана ниçта та кун памарĕç
Хура та сĕмсĕр ĕмĕрсем.
Уксах Тимĕр сана йĕрлерĕ
Пăлхарсене аркатнă май.
Хула-ялсем вутпа кĕрлерĕç,
Чăваш сасси шăпланнă май.
Хăвна упрас тесе эс çитрĕн
Кĕтнепеле Сăр тăрăхне.
Сассу кунта та санăн çĕтрĕ
Лексен вăрманăн чăтлăхне.
Эс пытанса шăппăн пурăнтăн,
Сассу тухмарĕ тип вартан.
Хăвна упрас тесе пытантăн —
Кĕç çухатмарăн ху ятна.
Çармăç вырăнне хурса пăтрашрĕç,
Тÿр килмесен те сан чĕлхÿ.
Мадьяр та Финн тесе те пăхрĕç —
Чĕлхем çинче халь те хĕрхÿ.

Кипчаксем сана пит хĕсрĕç —
Чĕлхӳ сан çĕтрĕ ун чухне.
Чăн чăвашсем сахал-и пĕтрĕç
Унрас тесе чăваш ятне.

—2—

Ахальтен мар пусна эс пĕкрĕн
Кĕтсе Мускавран пулăшу.
Аслă княç патне те çитрĕн:
Виçесĕр çунчĕ сан ăшу.
Чăнах та вырăс хӳтĕлерĕ,
Чĕлхӳне хĕсмерĕ малтанах.
Ĕçкĕсенче сассу кĕрлерĕ
Вăрманлă ялсенче анчах.
Сана вырăслатма кайран шутларĕç.
Каласма хушаççĕ вырăсла,
Сан чĕлхӳне шута хумарĕç —
Çырма хистерĕç вырăсла.
Чĕлхӳшĕн ирĕклĕх пулмарĕ,
Вăл янрамарĕ çĕр çинче.
Çырмасенчен сассу тухмарĕ —
Ытла та хĕсĕкчĕ тĕнче.
Çут Октябрь ирĕк пачĕ
Аталанма сан чĕлхӳне.
Чăваш чĕлхин шалти хăвачĕ
Ӳсме вăй тупрĕ пур енне.
Чĕлхӳ сан ирĕккĕн янрарĕ
Пĕр тапхăр пирĕн çĕршывра.
Пĕр айван пуç шутсăр хăрарĕ —
Чĕлхеме хĕсрĕç йĕри-тавра.
Çĕн тапхăрта вăл ирĕк илчĕ,
Аталанса пырать хуллен.
Анчах чăвашпа темĕн пулчĕ:
Писе пырать хăй чĕлхинчен.
Атьсем чăвашла халь пуплемеççĕ
Хуласенче те мăн ялсенче.
Мăннисем пач тăрăшмаççĕ
Вĕрентмешкĕн хăйĕн чĕлхине.
Чăваш йăхне пĕтерсе пыраççĕ
Хальхи вырăсланнă чăвашсем.
Тăван йăх, тен, пĕтнишĕн савăнаççĕ
Пуç тăрри шăтăк манкрутсем.

## ÇУК, ТĔЛ ПУЛМĂП УРĂХ САНПАЛА!

Эп сана юратрăм ăнсăртран.
Тутуна хĕретнĕччĕ хĕп-хĕрлĕ.
Чĕрнӳсем те хĕрлĕ, вăрăм сан,
Эс çӳçне сăрланă тĕрлĕ-тĕрлĕ.

Яшсене пĕлетĕн илĕртме,
Пĕççӳсем кĕрнеклĕ те яр уçă.
Юбкуна кĕске çĕлеттерен,
Мĕнле чăтĕ каччăн шухă куçĕ.

Юратма пăрахрăм эп сана:
Хĕрупраç ĕçне пачах пĕлместĕн.
Эс тухса курмастăн пахчана,
Хăв валли кĕпе те çĕлеместĕн.

Пăтă та пĕлместĕн пĕçерме,
Кукăль те, шӳрпе те пĕçерместĕн.
Яшсене пĕр вăхăт илĕртме
Пукане пек тумланса çӳретĕн.

Çук, тĕл пулмастăп урăх санпала:
Ку юратура телей курмастăп.
Пуш чечек пек ешерен çапла.
Çавăнпа сана текех савмастăп.

## ПĔР ХУТ ÇЕÇ САНПАЛА ТĔЛ ПУЛАСЧĔ

Санпала ăнсăртран эп тĕл пултăм
Шур хула Шупашкар скеврĕнче,
Ăнланмарăм малтан, шуххăн култăм
Ман умра вăтанса тăнинчен.

Каçхине ăсатмашкăн сĕнсессĕн
Килĕшмерĕм-çке темшĕн ун чух.
Паян кун манпалан пулсан эсĕ
Пĕр сăмах, сив сăмах калас çук.

Алла-аллăн сăмахсăр утасчĕ
Урампа иккĕн çеç юнашар,
Утма мар, пĕр хут çеç тĕл пуласчĕ:
Ах мĕн-ма-ши инçе Шупашкар?

## ЕТĔРНЕ САЧĔСЕМ

Шурă-шурă тумтир тăхăнаççĕ
Çуркунне Етĕрне сачĕсем.
Çеçкесем пек хитре курăнаççĕ
Шăварма килекен хĕрĕсем.

Кайăксен юррипе янăраççĕ
Çу каçах Етĕрне сачĕсем.
Шăпчăкран кая мар шăранаççĕ
Ĕç çинчи хĕрĕсен сассисем.

Улмипе-çырлипе мухтанаççĕ
Кĕр енне Етĕрне сачĕсем.
Пиçекен çырла пек курăнаççĕ
Улмасем пухакан хĕрĕсем.

Шупашкар,
1955 çулхи авăн уйăхĕ.

## ТĔЛ ПУЛСАН САНПАЛА...

Санпала ăнсăртран эп тĕл пултăм
Кăçалхи рабселькор съездĕнче.
Ăнланмарăм малтан, шуххăн култăм
Чĕререн тухакан сăмахсенчен.
Каçхине ăсатма эс сĕнсеччĕ
Советсен çуртĕнчен хваттере.
Ун чухне эп сана итлеменччĕ —
Юлташсемпе кайса театра.
Ик кунтан Шупашкара хăвартăм,
Эп вĕçтертĕм тăван кĕтессе,
Шухăшпа ĕмĕтре ыталарăм
Сана эп, çывăх тусăм, тесе.
Пит нумай çĕрсене çитсе куртăм,
Статьясем те çырап сахал мар,
Сан çинчен шутласа эпĕ ыртăм,
Чĕрере йăлкăшать вут-кăвар
Халь чĕнесчĕ тепре ăсатмашкăн
Тĕл пулсан Шупашкар хулинче.
Эпĕ хатĕр ирччен те утмашкăн
Тытăнса санпала хулсенчен!

## САЛТАК

Салтак яланах вăл салтак
кĕрешӳре, ĕçре.
Вăл пырать ялан малта —
çул çук ун хыçалта.

Салтак пурне вăл тӳсет,
Ăçта тӳсмест металл:
Ыр ячĕ çавăнпа ӳсет,
Çĕршыв сунать вăй-хал.

Салтак пурне те вăл сыхлать,
Сыхлать тăван çĕре.
Тен, çавăнпа ăна ырлать,
Кашни çут тĕнчере.

Эпир те пулнăччĕ салтак
Çĕршыв пире чĕнсен,
Калам-ха ун пирки пăртак
Кăмăлăрсем килсен.

Ун чух çунатчĕ Ленинград
Фашист хĕссе пырсан,
Эп те пулнăччĕ фронтра —
Çунтарнă пулеметран.

Пĕр утăм тăшмана яман —
Пӳлнĕ ун çулне.
Чаплă хулана паман
Тискерсен аллине.

Халь эп те, эс те салтак мар,
анчах чунпа хастар,
Çĕршыв чĕнсен, тăратпăр кар!
Типĕ тытатпăр тар.

Салтак яланах вăл салтак,
Хуть пултăр кирек ăçта.
Салтак пырать ялан малта —
Çул çук ун хыçалта!

## САНА ЭП САВРĂМ

(Романс)

Эпир санпа пĕрне-пĕри пĕлсеччĕ,
Пуçа тайса иртеттĕмĕр курсан.
Чуна вут-çул тӳрех ярса илетчĕ,
Асамлă вăй туртатчĕ тĕл пулсан.

Чечен çак вăхăт хăвăрт вĕçсе иртрĕ,
Вĕçсе иртейрĕç çулăмлă çулсем.
Илем куллу сасартăк куçран çĕтрĕ —
Хĕлхем сапмарĕ урăх ман чĕрем.

Кичемлĕх аллинче пайтах çӳрерĕм,
Чылай çунтартăм хамăн ăшăма.
Пĕччен тунсăхласа самай кĕллентĕм,
Памасăр канăç вутлă чунăма.

Ăш кăнтăра кайма мана тӳр килчĕ,
Сана тĕл пултăм тинĕс хĕрринче.
Хăватлă туйăм чуна туртса илчĕ —
Сана эп саврăм кăнтăр ăшшинче.

Шупашкар,
1991 çулхи юпан 12-мĕшĕ.

## ТЕКЕХ ЭП САНШĂН ЧĔРЕНЕ ÇУНТАРМĂП

Сана паян калех эп тĕл пулмарăм,
Сана курмарăм хамăр урамра.
Паян эс темшĕн урама тухмарăн —
Йăл-йăл кулса иртмерĕн ман умран.

Эрне каçпа мана хытах шантартăн:
Кристалл пек манăн çирĕп юрату.
Аллупала та хытă чăмăртарăн —
Нихăçан та пĕтмĕ хушăри тату.

Сана чăнах эп чунтанах ĕнентĕм,
Асра эп тытрăм сăмахусене.
Сана шанса эп вут ăшне те кĕтĕм,
Вилме памарăм пĕр çын ачине.

## ЛЕНИНГРАД ХĔРНЕ

Çурхи каç палатăра шăпахчĕ,
Эп кăна выртаттăм йăнăшса.
Час-часах пырса пăхатчĕ
Шур халатлă çамрăк медсестра.

Ыратса касса кайсах туртатчĕç
Шăмма лекнĕ юнлă сурансем.
Чĕре, чĕре! Кĕç тухса тарас пек
Сиксе ташлатчĕ... юлашки хĕлхем.

Сив компресс çамка çинче типетчĕ,
Ӳт-пӳ выртатчĕ вутри пек çунса.
Чĕлхе-çăвар типсе ларатчĕ,
Васкаса ĕçеттĕм чыхăнса.

Ирсерен сестра ялан пыратчĕ,
Градусник лартатчĕ хул айне.
Хĕрĕх градус вĕрине куратчĕ,
Çавăнтах чĕнетчĕ врачсене.

Укол тăваççĕ, эмелсем параççĕ,
Тăрăшса сиплеççĕ вилесрен.
Сестрана хушса хăвараççĕ
Эмельсем памашкăн сехетрен.

Вăл сурансене салтса пăхатчĕ,
Риванольпе çыхатчĕ çĕнĕрен.
Пенициллинпа уколсем тăватчĕ,
Анаприлин паратчĕ чĕререн.

Сестра мана тăрăшсах сиплерĕ:
Сывалса пычĕç ман урасем.
Кашни хутчен вăл ăшшăн пуплерĕ,
Юратупа тулчĕ ман чĕрем.

Юлашки кун манпа тĕл пулчĕ
Госпитальрен эп тухнă чух.
Ал тытса кăмăллăн кулчĕ —
Мана вăл сунчĕ телейлĕ çул.

Сывалса яла та килсе ҫитрӗм.
Чылай эп куртӑм ырӑ хӗрсене —
Анчах нихҫан асӑмран ямарӑм
Питех ыр чунлӑ Ленинград хӗрне.

## ХАВАСЛАНСАХ ЁÇЛЕ, СЕРГЕЙ ПИЧЧЕ!

Ак ман аламра çĕнĕ кĕнекен алçырăвĕ. Кунта сăвăсем, юптарусем, поэмăсем... Ку унăн иккĕмĕш сăвăлла çырнă кĕнеке. Прозăпа вăл ултă кĕнеке авторĕ. Пурте вĕсем вăрçă тематикипе. Сергей Павлович Юшков хăй те Тăван çĕршыв вăн пынă вăрçăра ютсемпе хастар çапăçнă, Карели çĕрне тăшмана кĕме паман, çавна вăл «Вутлă çумăр», «Кĕрен кӳлĕсем» повеçсенче ĕненмелле кăтартса панă, аслă Петĕр хулине (ун чухнехи пек Ленинграда) хăйĕн çывăх юлташĕсемпе пĕрле паттăр хӳтĕленĕ, ăна хăйĕн «Çĕршыв чĕнсен», «Вутра пиçĕхнисем», «Манăçсăр юрату», «Пĕр куç хупмасăр» кĕнекесенче сăнарласа хăварнă.

Уйрăмах унăн прозăри пултарулăхĕ, геройсене витĕмлĕ ӳкерсе парасси, чĕлхи илемлĕхĕ «Кĕрен кӳлĕсем», «Вутра пиçĕхнисем» повеçсемпе «Пултаруллă Микулай», «Вутра çуралнă туслăх», «Хăвăл йăмра», «Шиксĕр Орпик», «Унăн çутă сăнарĕ», «Çĕмĕрт çеçки çуралсан», «Этем тени», «Вилĕм çири кĕперен те çывăх» калавĕсенче питĕ уççăн курăнаççĕ, вулакан кăмăлне каяççĕ.

С. П. Юшков — талантлă прозаик пулнине унăн калавĕсемпе повеçĕсем çирĕплетсе панăччĕ. Халĕ тухмалли сăвă кĕнеки вăл поэзире те пултаруллă пулнине çирĕплетсе парать. Унăн кашни сăвви илемлĕх енчен те, шухăшĕ тĕлĕшĕпе те пулса пиçсе çитнĕ, юптарăвĕсем вара тĕрлĕ киревсĕрсене ытарлă сăнласан та йĕплĕ хулăпа хытă çунтараççĕ. Поэмисемпе юмахĕсем сăнарлă чĕлхепе çырнăран асра юлмалла пулнă. Вĕсем вулакан тавракурăмне, историпе; тăван тавралăх пĕлĕвне сарма, анлатма пулăшаççĕ. Çавăнпа вĕсене алăран ямасăр кăсăклансах вулатăн.

Сергей Юшков — пултаруллă тĕпчевçĕ, çур ĕмĕре яхăн çамрăксене чăваш чĕлхине, чăваш культурине, чăваш литературине, йăла йĕркине юратма вĕрентнĕ. Ахальтен мар ăна Чăваш республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тата Чăваш халăх ăсчахĕ ятне панă.

— Сана, Сергей Павлович, 80 çул тултарнă май, хăвăн юратнă ĕçре ăнăçлăх, çирĕп сывлăх, тулли телей сунатăп.

Ĕмĕтӳ çитсе пытăр. Павăл Çирукĕ, эпир, юлташусем, сана хисеплетпĕр те хаклатпăр, сана çывăх туятпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Александр АРТЕМЬЕВ,**
**чăваш халăх писателĕ.**

## ТУПМАЛЛИ


Хам ҫинчен кӗскен ҫырни 3
Тав сӑмахӗ 8
Поэмӑпа юмах-халапсем 10
Ҫулӑмлӑ ҫулсем (поэма) 11
Йкӗ пуян (юмах) 19
Виҫҫӗн пӗр тӑван (халап) 37
Ватӑ юманлӑх ыйтӑвӗсем 47
Юптарусем 54
Хурама 55
Кӗнеке хурчӗ 55
Качакапа Така 56
Автан 57
Йытӑпа Чӑх 57
Чее Тилӗ 58
Чукмар 60
Лашапа Арлан 61
Тилӗпе Кушак 62
Ученӑй агроном 63
Лашапа Каюра 64
Упа сӑнчӑрӗ 65
Шӑши 66
Упана утар шанса парсан 67
Йӗкехӳрепе Арлан 68
Хурлӑханпа Вӗлтрен 69
Тилӗ 70
Критик Автан 71
Кӗске юптарусем, пародисем 72
Калта 72
Тӑрна 72
Ёҫчен Арлан 72
Хам пӗҫернӗ ҫӑкӑр 73
Лар, аннеҫӗм, юнашар 73
Ҫӗнӗ ҫул такмакӗсем 75
Тӗрлӗ ҫулхи сӑвӑсем 77
Тӗлӗнтермӗш сунарҫӑ 78
Сӑмах хӑватӗнчен шӑратнӑ палӑк 79
Ёмӗтӗм, ҫунатлӑ эсӗ 80
Ҫӗн ҫул сӑвви 80
Пурпӗр, чунӑм, юрла 81
Асра тытмашкӑн студента 81
Юлатӑн эс асра 82
Чӗлӗм ан турт-ха эс, ачам! 83
Шухӑшсем 84
Кӑмӑл-туйӑм сӑввисем 85
Май ҫук-ҫке сансӑр пурӑнма 85
Хулари чӑвашсемшӗн хуйхӑрса шухӑшлани 87
Ман тантӑшӑм вилмен 87
Ҫамрӑклӑх уявӗ 88

Пирĕн пикесем 88
Эс телей кӳрен чечек 89
Чĕреме хĕлхем эс ятăн 90
Тунсăхлатăп 90
Асăмра, чунăмра эсĕ юлтăн 91
Ялан курас килет сире 91
Пĕрре курсах сана ун чух юратрăм 92
Сана инçе çула ăсатрăм 93
Телей хĕвелĕ хăçан ăшшăн кулĕ? 94
Чунра эс чĕртрĕн çĕнĕ туйăм 95
Пурнăç урапи 96
Чăваш чĕлхи элчелĕ 96
Çук, тĕл пулмăп урăх санпала 98
Пĕр хут çеç санпала тĕл пуласчĕ 98
Етĕрне сачĕсем 99
Салтак 100
Сана эп саврăм 101
Текех эп саншăн чĕрене çунтармăп 101
Ленинград хĕрне 102
Хаваслансах ĕçле, Сергей пичче! 104

Сергей Юшков

# ПУРНАҪ ТУПИНЧЕН

Сăвăсемпе поэмăсем, юмахсемпе юптарусем.

**Редактор Г. И. Ильин.**

Сдано в набор 27.01.1998 г. Подписано к печати 5.02.98 г. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Гарнитура литературная. Печать высокая. Учетно-изд. л. 6,0. Тираж 1000. Заказ № 6. Лицензия № 040807 от 10. 04. 97 г.

Кугесьская типография Государственного Комитета
по печати ЧР.
429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район,
пгт. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.



Сергей Павлович Юшков педагогика наукисен кандидачĕ, доцент, чăваш халăх ăсчахĕ «халăх академикĕ», Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, А.Талвир ячĕллĕ премиин лауреачĕ, СССР писательсен тĕнчери халăхсен ассоциаци членĕ, вăл çамрăксене аслă пĕлӳ ЧГПИ-пе ЧГУ-ра хĕрĕх çул хушши панă хушăрах шкул ачисене валли ытти авторсемпе пĕрле ултă шкул учебникĕ тата хăех 3 методика кĕнеки, вăтăр ытла ăслăлăх статьи, доктор диссертацийĕ çырăть.

Вăл илемлĕ сăмах ăстаçинче те ăнăçла ĕçлет: "Вутлă çумăр", "Кĕрен кӳлĕсем","Вутра пиçĕхнисем", "Çĕршыв чĕнсен","Çулăмлă çулсем", "Пĕр куç хупмасăр", "Çил çаврăнсан", «Манăçсăр юрату» калавĕсемпе повеçĕсене пичетлесе кăларать, вĕсене вулакансем хапăл тусах йышăнчĕç. Çыравçă вутлă çумăр витĕр тухнăскер, вăрçă терчĕ, тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсем çинчен ĕненмелле сăнлать, тăнăç пурнăç илемне ăста ӳкерет.

Çыравçă Чăваш çĕршывĕнче Етĕрне тăрăхĕнчи Атăл кассинче 1918 çулхи юпан 12-мĕшĕнче çуралнă. Шупашкарта 60 çул пурăнать. Палтайри вăтам шкулта вĕреннĕ, Шупашкарти педагогика институтне вĕренсе вырăс чĕлхипе литература учителĕ, Мускаври аспирантурăна вĕренсе, диссертаци хӳтĕлесе ученăй ятне илнĕ.

Çамрăк мар пулин те, писатель алла усса лармасть, сăвăсемпе поэмăсем, повеçсем хайлать.

Вăл "Çилтăвăллă раштăв" роман та çырса пĕтĕрчĕ. Хăй 80 çул тултарнă ятпа "Пурнăç тӳпинчен" ятлă сăвăллă хайлавсем юрлавсем хатĕрлерĕ, ăна вулакана ырă кăмăлпа сĕнетпĕр.